Раҫҫей Хветеватăн Сотсиалисăмпа Канаш Респупликин.

21-23

Пĕтĕм тĕнҫери пролеттарисем, пĕрлешĕр!

ПЕҪЕРСКИ.

# Вăрмансенче,

5 пайлă пйесси.

(В лесах, пьеса в 5-ти действиях).

На чувашском языке

Чувашское Отделение Государственного Издательства
Казанское подотделение.
ХУСАН—1921 ҫул.

Расҫей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Респупликки.

*Пĕтĕм тĕнђери пролеттарисем, пĕрлешĕр!*

ПЕЂЕРСКИ.

# Вăрмансенте,

## 5 пайлă пйессă.

(В лесах, пьесса в 5-ти действиях).

НА ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ.

ТĔП ЂĂВАШ ПАЙĔ КĂЛАРНĂ.

Издательство Центрального Чувашского Отдела при Народном Комиссариате по национальным делам.

ХУСАН—1921 ҫул.

# Вӑрмансенҫе.

(Потап Ҫапурин ҫемйи).

**Выҫакансем.**

1) Потап Максӑмҫ—пуйан хресҫен.
2) Укҫине (аппа)—унӑн арӑмӗ.
3. Нӑҫтук } вӗсен хӗрӗсем.
4. Пӑраски }
5. Манехве—П. Максӑмҫӑн йӑмӑкӗ.
6. Хҫукка—П. Максӑмҫ патӗнҫе ӳснӗ хӗр.
7. Микихвӗр—Укҫиненӗн шӑлнӗ.
8. Еҫуш—тарҫӑ, унтан П. М. прикашҫӑк.
9. Пантеш—тарҫӑ.
10. Хваттере кӗнӗ ҫын.
11. Маӳук—П. М. прислуки.
12. Миккитишна—Наҫтукӑн хреснӑй амӑшӗ.

---

Р. В. Ц. Казань 4000 экз.

Пятая государственная типография. 1921 г.

# Пĕрремĕш пайĕ.

(П. М. пӳртĕн пĕр пӳлĕмĕ. Сылтăм кĕтессинҫе кĭмака, ҫтенисем ҫине тĕрлĕ карттинкă ҫакнă, 2 куҫкĕски, сĕтел, тенкĕлсем. Пуҫламăшĕнҫе Пот. Мак-па иртсе-ҫӳрен ҫын ҫей ĕҫсе ларaҫҫĕ).

## 1-мĕш курăнни.

Иртсе-ҫӳрекен—Сирти тĕнҫе шăлт урăхла. Пирĕн Аҫтăрхан ҫеҫен-хирĕнҫе пĕр ҫĕр ҫухрăма пĕтĕм тĕнҫе курăнса выртать. Сирĕн сĕм вăрман, вунă ҫухрăмра мĕн пулнине ĕмĕр пĕлес ҫук.

Потап.—Пирĕн ҫĕр-шыв сирти мар: вăрмансенҫе, сĕм вăрманта пурăнатпăр. Пирти халăх та вăрманĕ пекех сĕм тĕттĕм.

Иртсе-ҫӳрекен—Апла пулсан та, калама ҫук аван пурăнатăр.

Потап—Пĕр майĕпе пурăнатпăр. Пирти халăх пĕҫҫе тăратса выртма йуратмасть, тырă-пулă пулмасан, мĕн те пулин хăйне тăранмалăх шыраса тупать. Тĕнҫе касма-тума та, кăмăлĕ выртмасть, ăҫта та пулин пурлака кайиҫҫен ыйткалама тухĕ. Сăмахран каласан, пирте ыйкалакан та ҫук. Хастар халăх. Ĕҫлеме мĕн те пулин тупатех.

Ирт. çӳр.—Ђăнах ташăлт урăх çĕр-шыв, урăх халăх.

Потап.—Пирте çĕрме пуйан нумай пулмасан та, пиншер тенкĕллисем сахалах мар. Анђах вĕсем укçисене кăларма халăха систерме йуратмаççĕ, ăçта та пулин панка хуриђђен çĕр айне кăкшăмпа нумайрах пулсан хуранпа та ђавса хурать. Суту-илӳ тăвакансем те пур.

Ирт.—çӳр. Есĕ авă тĕрлĕ савăт-сапапа аппалана пуçлатăн.

Потап—Çуркунне, çырмасем уçăлсан, айалалла йарас тетĕп, сирĕн паталла.

Ирт.—çӳр.—Тупăшĕ пур пулĕ?

Потап.—Ахалех ĕçлеместĕп çав, ĕçес-çийес килет вĕт.

Ирт.—çӳр.—Ман уттарма та вăхăт ĕнтĕ. Сывă пул. Арăмна салам кала. Акă вăл хăй те çитрĕ; тавта пуç тăхлађă. (Укçине кĕрет).

## 2-мĕш курăнни.

(Çавçемех тата Укçине).

Укçине—Сывлăха пултăр, тав тăвасси те çук.

Потап—Вăхăт тупсан килсе кайкала. Анасласа тăриђђен шапăлтатса ларăпăр.

Ирт.—çӳр. Кĕркелĕп. Тавта пуçах хуçасем! (тухса кайать).

## 3-мĕш курăнни.

Пот. Мак-па Укçине.

Укçине—Кам вара ку?

Потап—Аçтăрхансем. Ман унпа ĕçемс пур.

Уксине—Хёрсем патне кёрсе пăхмарăн-и?

Потап—Куртăм-çке. Есĕ Уксине вĕсене астăварах тăр.

Уксине—Мĕн вĕреннĕ-и кăшт та пулин?

Потап—Вĕреннĕ, кĕлĕ-кĕнекисене виттĕр пĕлеççĕ, пăхмасăр шакăртаттарса вуласа тухаççĕ, кĕнеке çине тĕрлĕ тĕрĕсем тума, мĕн кирлĕ ăна сырма пĕлеççĕ. Акă асту (Кăсйинђен тетрат кăларат).

Уксине. Мĕн те пулин ырă йапала пулĕ, турă кăмăлне кайакан кĕлĕсем çырнă пулĕ, вуласа кăтарт-ха.

Потап—Ак кунта патша Иосих ывăлĕ синђен çырнă (листисене усат) кунта: „ђăршă тупăкĕ“ çинђен çырнă.

Уксине—Ах ђађа, матур та-çке.

Потап—Ак кунта акă:

Ыр çĕр-шыва пăрахса
Çеçен хире кайăп еп,
Савнă тусран уйрăлса
Мĕн-ђулђ асап курăп еп.

Уксине—Мĕн каласан есĕ, Потап Максимђă? Ђăн-и?

Потап—Ку мĕн? Малалла асту-ха:

Савнă савнă автана,
Савса турă çуратнă,
Йĕкĕтпеле выђама
Пире турă çуратнă.

Уксине—(Пуçне сулласа) Ай-ай! Ађа вăййи-çке.

Потап—(Витлесе) Ађа вăййи. Есĕ вĕсене астăварах тăр!

Уксине—Мĕн астума? Ахаљ те лăпкăран лăпкă хĕрӳсем.

Потап—Епĕ ăна-кăна каласмастăп. Çулĕсем пур, ситĕннĕ, мĕн те пулин ан пултăр тетĕп.

Ук ҫ и н е—Вӗсен пуҫӗсене те кирлӗ мар шухӑш кӗмест пулӗ-ха. Сӑпкаран ђух тухса ӳкнӗ.

П о т а п—(Витлесе) Сӑпкаран ђух тухса ӳкнӗ. Наҫтуку 19-та мари вара. Кађђа кӗтсех тӑраӗ.

У к ҫ и н е—Ан калаҫ. Ху хӗрне ху кураймастӑн. Мӗн кирлӗ мара лӑпӑртататӑн. Кађђа кайма мар ун ҫинђен шухӑшлама та пӗлмест пулӗ-ха.

П о т а п - Лӑпӑртататан. Вӗсем Комарувкӑра темӗн те курса пӑхнӑ пуђ!

У к ҫ и н е—Ҫылӑха ан кӗр. Манехве мӑнастырӗнђе ӗмӗр нимӗн пулман. Ан калаҫ.

П о т а п—есӗ ытла нумай курнӑ-им? Епӗ куркаланӑ пӗлетӗп.

Укҫине—Кирлӗ-кирлӗ мара лӑпӑртатма ђарӑн ӗнтӗ. Кашни сӑмахшӑн леш тӗнђере турра хирӗ· каллассине мантӑн-и? Тӗрлӗ ђурт-ђураманпа ҫӳпӗлтететӗн те, вӗренсе кайнӑ мура. Каласассӑм та килмест. (Тухса кайаӗ).

П о т а п—(Тенкӗл ҫине ларат, шут туртса пӑхаӗ, унтан ура ҫине тӑраӗ) уйӑрӑласси кӑмала каймасан та ҫитӗннӗ хӗре кађђа парасах пулаӗ, хӗр вӑл каснӑ ђӗлӗ. Ҫитер-ӗҫтер, тумлантар, унтан ҫынна парса йар. Пӗр-кун Тихӑн Танили пӗр йумах йађӗ, ывӑлне авлантарасси ҫинђен татса хуђӗ. Мӗн вара пуйан, ырӑ турӑран хӑракан ҫынран намӑсланаканскерсем. Мӗншӗн хурӑнташланас мар кађђи те ӗҫђен, илемлӗ.. Тепӗре курсан ӗҫе пӗтерес пулӗ. Ҫитӗннӗ хӗре килте ытла усрама хӑрушӑ та, намӑс курӑн.. Амӑшӗ амӑш. Ӑҫта есӗ ҫухалнӑ?

У к ҫ и н е—(Кӗрсе) Мӗн тата?

П о т а п—Епӗ шыва кайатӑп, ыран кӑшерни кунӗ, есӗр хатӗрлӗр. (Тухса кайаӗ).

Уксине—(Хыҫалтан) Хатӗрлӗпӗр-ҫке.

## 5-мӗш курӑнни.

Амӑшӗ, Настук, Праски.

Пӑраски—Анне сурӑхури тытма йар пире хӗрсем патне.

Укҫине—Есӗ-мӗн, ухмахланнӑ-и? Аҫу килсен катартӗ сана сурӑх ури..

Наҫтук—Епӗр пӗҙҙен мар вӗт, пӗтӗм касӑ хӗрӗ пухӑнать.

Уксине—Ыттисем есӗр мар. Сирӗн сурӑх ури тытмалла-и?

Наҫтук—Ыттисем ҫӳреҫҫӗ-ҫке.

Укҫине—Есӗр апла йатӑра йарасшӑн-и-ха?

Пӑраски—Мӗнле йат?

Укҫине—Акӑ пушӑ илсе хӗртӗп-хӗртӗп-те, сисӗн вара мӗнле йат иккенне. Сире намӑс унта ҙупма. Каҙҙӑ пырса тулнӑ пулӗ. Мӗн унта хӳресене йӗпетсе ҫӳреме?

Наҫтук—Ыттисемпе пӗрле пирӗн те выҙас-кулас килет-ҫке.

Укҫине—Епӗ сире йамастӑп терӗм, ахӑлтатса вӑхат ирттериҙҙен турӑ кӗнеки вуласа ларӑр. Кайса ларӑр хӑвӑр патӑра! (Тухса кайаҫҫӗ лешсем). Йарӑттӑм та сире, ашшӗ килсен сиҫе йарӗ! Ех хӗр вӑхӑҙӗ. Пухӑннӑ ӗнтӗ вӗсем: выҙаҫҫӗ, кулаҫҫӗ, ҙуп-тӑваҫҫӗ. Мӗн епӗ ҫылӑха кӗретӗп тата ват супнӑ-скер! (Урамратӳреҙе патӗнҙе йурлани илтӗнет).

Потап ҫурҫӗ Мускав пек,
Укҫа йенҫен-патша пек,
Хӑйне пӑх-ха-улпут пек,
Хӗрӗсем-хирти ҫеҫек пек.
Сурӑх ури, Сурӑх ури,
Хӗрсем тухӑр сурӑх ури!
Потап пиҫҫе ҫурҫӗсем,
Хула тесе калӑн ҫав!
Потап пиҫҫе хӗрӗсем,
Пике тесе калӑн ҫав!
Сурӑх ури..
Унӑн ҫуртне кӗрес-ҫӗ,
Ҫыссем курса тухас-ҫӗ,
Сурӑх урире выҫама
Хӗрне илсе тухас-ҫӗ
Сурӑх ури..

Укҫине—Ах путсӗрсем, ҫылӑхран та хӑрамаҫҫӗ. Ӗнер хӗрес туса тухса мӑйракалисене хӑваларӗҫ, халӗ вӗсен мӑйраки ҫине утланса ларнӑ. Нимӗнрен те хӑрамаҫҫӗ. (Илемсӗр сасӑ йурлаҫ.)

Сурӑх-ури тытасшӑн
Ҫупа-ҫупа тӗп пултӑм,
Тӑванран ырӑ курайман:
Ӗмӗрлӗке хур пултӑм.
Сурӑх ури, сурӑх ури..
Килте-и вара хуҫи'

Укҫине—Ах турӑ! Путсӗр Микихвер сасси мар-и вара? (ӳсӗр Микихвер кӗҫӗн алӑка шаккаҫ?) Ан кӳртӗр ҫав пуҫсӗре! Шӑнса вилтӗр, мур! (Шӑнкӑрав сасси илтӗнет). Наҫтук аҫу ҫитрӗ, сӑмавар хатӗрле (тухса кайаҫ).

## 6-мӗш курӑнни.

Пот. Мак. ун хыҫҫӑн Елекҫи.

Потап—(Алӑка уҫса) Сывӑ-и йӗкӗт? Есӗ ман патӑма-и?

Елҗуш—Сан патна Потап Макҫымҗӑ килтӗм-ҫке.

Потап—(Кӗреҫҫӗ) Кӗр, килех. Мӗн кирлӗ пулҗӗ?

Елҗуш—Пӗр ӗҫпе килтӗм..

Потап—Сире ҫаратса тухнине илтрӗм епӗ. Калама та ҫук шеллетӗп. Ӗҫлес пулат. Иова ӗлӗк пулӑшнӑ пек турӑ сире те пулӑшӗ. есӗ хут пӗлетӗн, вуланӑ пулӗ Иов ҫинҗен? Мӗнпе пулӑшӑп вара?

Елҗуш—Епӗ сана тарҫӑ кирлӗ тенине илтнӗ-җҗӗ. Тарҫа илмӗн-ши?

Потап—Ех, ех! Ҫынна ӗҫлес пулҗӗ-и? Йе пӗтӗмпех пӗтерҗӗҫ-и?

Елҗуш—Нимӗн тума та ҫук. Ҫын панҗе пӗр-ик ҫул ӗҫлес тетӗп вара ура ҫине каллех тӑрӑпӑр. Шӑлнӑм та ҫын патне кайат. Аттене пит йӑвӑр пире ҫын патне йама та, нимӗн те тӑваймӑн, турӑ ҫапла ҫырнӑ пулӗ.

Потап—Ак сана аҫуна укҫа, сан шалу ҫинҗен пултӑр. Кирлӗ пулсан, җаранса тӑмӑн. Хӑҫан ӗҫлеме килес тен?

Елҗуш—(Укса илсе). Тавта пуҫ сана, Потап Макҫӑмҗӑ, епӗ праҫнӑк пулмасан ыранах та ӗҫлӗттӗм. Ырантан пӗр куна килӗп.

Потап—Йурӗ. Мӗн есӗ пайан килтӗн, сан пеккисем пайан сурӑх ури тытма пухӑннӑ, выҗаҫҫӗ.

Елҗуш—Ех, П. М., вӑйӑ шухӑшӗ-и ман? Иртрӗ выҗасси-куласси.

Потӑп—Җӑн сӑмах. (Кӗрет Наҫтук).

## 7-мӗш курӑнни.

Н а ç т у к—(Еђуш çине пӑхаҫ те хӗрелсе кайса пуçне ђикет) Атте, сӑмавар кӳрес мар-и?

П о т а п—Йурӗ. (Еђуша) Апла ыраттан пӗр куна кил еппин. Еђуш йатлӑ марђђӗ-и-ха есӗ?

Е ђ у ш—Еђуш йатлӑ.

П о т а п—Аçуна салам кала, укçа кирлӗ пулсан килтӗр.

Е ђ у ш—Йурӗ, тавта пуç. Сывӑ пулӑр! (Тайӑлаҫ те тухаҫ).

Н а ç т у к—(Тайӑлва ђух хӗрелсе кайаҫ, саппун аркине ђӑмӑртаҫ) Атте, кам ку?

П о т а п—Тарçа кӗрӗшрӗ.

Н а ç т у к—Ӑçтисем, кам ађи?

П о т а п—Çаратнӑ Микихвер ывӑлӗ, илтнӗ-и?

## 8-мӗш курӑнни.

### П ӑ р а с к и к ӗ р е т.

П ӑ р а с к и—(Ашшӗне ыталаса) Атте килнӗ, куђђенеç кӳтӗне ман валли?

П о т а п—Пӗрре мар иккӗ пӗри ђӗн пушӑ, тепӗри пурçын нухађка, хӑшне çисе пӑхасшӑн?

П ӑ р а с к и—Атте есӗ ан кул, ђӑнне кала.

П. М.—Мӗн улталама, пӗрте улталамастӑп. Есӗ итлеха, сана нухађкапа пушӑ çитерсе пӑхтариђђен сӑмавар илсе кил. Аппу манса кайрӗ. Ех хӗри-пӑраç шухӑшӗ. (Укçине кӗрет сӑмавар йӑтса, Пӑраски савӑт-сапа сӗтӗл çине лартаҫ, Наçтук ђӳређе патне кайса тӑраҫ). Укçине, есӗ ху менелникне пысӑк хӑнасем кӗт, илтетне?

Укçине—Кам вара?

Пот. Мак.—Кĕрçук Васлейĕ, Иванкка кум Крунипе, тата самар çынни Снешкох Танилĕ ывăлĕпе килме пулçĕç. Снешкох тенипе ман пит пысăк ĕç тумалла. Пит пуйан çын, пĕр çур мĕлйун кăна укçи пур, хапрăк-савăт, хула пек çурт, мухтавлă çын, темиçе миталлă?

Укçине—Мĕн вĕсем кив тĕнпе пурăнаççĕ-и?

Пот. Мак.—Ыттине епĕ кÿртес те çук.. Ывăлĕпе килет. Ывăлĕ илемлĕ, ăслă, апшĕне пит те пулăшаť 22 кайнă. Асту, ан намăслантар!

Укçине—Хам ĕçе пĕлетĕп-çке. Ку кунсенçе Манехве Хлçукки те килмелле-ха мăнастиртен.

Пот. Мак.—Манехви килни йураť, леш йĕке хÿре килмесен те пырĕççĕ.

Настук—Ах атте, Хлçукки сана мĕн турĕ, лăпкă ырă хĕр.

Пот. Мак.—Йурĕ ĕнтĕ. Çĕлен пуллипе çăрттан тутине кăшт пĕлетĕп.

Укçине—Кăшт намăса пĕлес пулаť. Мĕн каласан? Манехве çупкăва тытас çук! Кирлĕ мара шавлакан сахал-и. Çĕлхешăмăсăр, пур йенне те çаптараť. Пурин сăмахне те çăна хурсан.. Сан хăвăн хĕрÿсем те.

Пот. Мак.—Пасăр ху сăпкара çух тухса ÿкейнĕ темерĕн-и? Ех карçăк, хывăх пуç. Миме вырăнне сан пуçна кĕсел тултарнă пулмалла. Килçвĕрех. Есĕ, Укçине, манпа ытла ан тавлаш. Кирлĕ мара персе йарипçен çейне пер, çынна та тултарса пар.

Укçине—Ес, ĕçех сăмавар та шыв тулли, хырăмна сарма çитĕ. Çей йарас мар-и?

Пот. Мак.—Укçа щеллес мар. Хăнисем мĕн тăраççĕ.

Иккĕшĕнҫен пĕр хĕре пиллесе пама йурат! (Хĕрĕсем пĕр пĕрин ҫине пăхса илеҫҫĕ).

Укҫине—Ашшĕ, мĕн вара есĕ никама каламасăр ĕҫе тăван, ĕҫ-и вăл?

Пот. Мак.—Тăвас тенипе тăватăпах. Сирĕн ĕҫ ҫукă унта. Мана хирĕҫ пĕр сăмах ҫĕнме те пултараймăр!

Наҫтук—(Ашшĕне йăпшăнса) Мĕн тăвăн вара пире?

Пот. Мак.—Мĕн тăвăп? Сана шариклеттерĕп, Пăраски мăнтăртарах, ҫулă пулĕ, шăрттана йурĕ. Хăна нумай пулаť, аш илсе ҫитереймĕн.

Наҫтук:—Шел пулĕ. Кăмакана ҫикеймĕн.

Укҫине—Ҫитĕ сире хĕрсем пустуйа вăхăт иртерме, кайăр хăвăр патăра ҫывăрăр. (Савăт-сапа пухаť, лешсем кайаҫҫĕ).

## 9-мĕш курăнни.

Пот. Мак—Сан савнă Микихвер пиҫҫӳ каллех килнĕ.

Укҫине—Килнĕ, шуйттан, килнĕ пуťсĕрскер. Ĕмĕр ăна курмăттăм, тăван мар, тăшман вăл ман! Хăваласа йар ҫав йатта.

Пот. Мак.—Ех Укҫине, Укҫине, калаҫан вĕт. Йут ҫын пулсан йурĕҫҫĕ. Ҫынсем мĕн калĕҫ. Мĕн кăна пулсан та вăл сан пиҫҫӳ. Кăларса пăрахма намăс. Куҫсене ҫивҫĕрех пăхас пулаť.

Укҫине—Тăван мар-йатă вăл! Тарҫăсене астума хушăп. Ăна кутран тапса сирпĕтсе кăларни авантарах пулĕҫҫĕ. Тарҫăсене хушма мар, хам та астăвăп. Ех, ҫĕр ҫăтасшĕ, пĕтинҫҫĕ вăл,

Пот. Мак.—Ухмахла калаҫан, турра манатăн.. Ăслă, ĕҫҫен, пур йенҫен те пултăкла, ĕҫни ҫеҫ ăна пĕтерет, кар-

ланки çын сăнне çухаттарať. Есĕ кăшт ђĕлхўне кĕскет, кирлĕ мара ытла шавлаť.. Епĕ паçăр каланине есĕ сисрĕн-и? Снешкох Танилипе кан ĕç пĕтернĕпе пĕрех.

Укçине—Мĕнле ĕç?

Пот. Мак.—Наçтука кађђа парасси çинђен.

Укçине—Мĕн васкан, йе хĕрў кăмăлна тăрантарђĕ-и? йе ĕçсе-çиçе сан пурлăхна пĕтерђĕ-им? Ăçта васкама?

Пот. Мак.—Мимўсенпе шухăшла, кĕреçўне ытла ан йапăлтаттар. Васкани пулаť-и вара, хĕрў миçере? 19-та мари вара?

Укçине—Кăшт тăхтасђĕ.

Пот. Мак.—Ахаљ те çитес хĕлри Михайлă кунне хăвармалла пулаť, ђас-и вара? Пăхсан та курăнмасť, кăшкăрсан та илтĕнмест, çулталаскран кăшт кайа. Есĕ Наçтука пĕр сăмах та ан ђĕн. Ђĕлхўне ђар.

Укçине—Йурĕ-çке. (Тухса кайаť).

## 9-мĕш курăнни.

### Пот. Мак-па Микихвер.

(Микихвер кĕрет те П. Мак. умне ђĕркуçленсе лараť). Потап Макçимђă турă пул, атте пул, мана ĕçлĕхрен тухнăскере, урама йăтта хуса кăларнă пек, ан кăлар, ан пăрах мана, пўтсĕрскере!

Пот. Мак.—Тăр, Микихвер, ура çине, йăваланни ĕç-и вăл?

Микихвер—(Укçине патнелле пырса) Тăванăм, йăмăкăм каçар-ђђĕ мана!

Укçине—Кай ман куç умĕнђен, есрелĕ! Çын вилли есĕ!

Пот. Мак.—Укçине, çылăха ан ман! Микихвер, ăçта тăсăлса çӳрерĕн? Каллех вăрçă тапратрăн-им? Астуха питӳкуçу ђăнахах та есрелех.

Микихвер—Ех Пот. Мак., ех кĕрӳ çийес килет-çке, мĕн тăван, пурăнас килет-çке. (Йĕрсе). Турă пул, ан хăвала.

Пот. Мак.—Сана пĕр те хăвалас çук. Микихвер хуђђăкам, тăвана каланă пек çав ерехе пăрах, тетĕп çын сăнне ан çухат! Шелле хăна ху!

Микихвер—Пăрахăп, ђăнахах та пăрахăп. Есĕ мана ан пăрах.

Пот. Мак.—Кайса çывăр-ха. Ыран калаçăпăр. (Микихвер тухаŷ).

*Ђаршав.*

# Иккĕмĕш пайĕ.

(Сђенă çавах).

## 1-мĕш курăнни.

(Наçтукпа Хђӳкка).

Наçтук—Ну, Хђӳкка, Комарăхкăра йĕнле пурăннине каласа пар-ха!

Хђӳкка—Пирĕн тĕрме пурăнăçне каламасан та пĕлетĕн ĕнтĕ. Тăнă тăманах ĕçсе-çимесĕрех сехет кĕлли вулама ђуп. Апат хыççăн каçхи кĕлĕ. Кунсеренех çапла. Хăш ђух систермесĕр, йала улаха вĕçтереттĕм. Манехве вара вăрçа вăрçа тĕп пулаŷђђĕ, мĕншĕн кайрăн, мĕн шырама хăвах пĕлетĕн ĕнтĕ пирĕн мăнастир пурăнăçне.

Н а ç т у к—Апла кам-кам патĕнҫе улаха пухăнса ларattăр?

Х ҷ ў к к а—Пайаркасем патĕнҫе ерне кун, Мускав пинсем патне ытлари кун, хăш ҫух мăнастирте те улах майлă йапала тăваттăмăр. Йалта авынтарах, унта каҫҫăсем пухăнатҫĕç. Ех выҫаттăмăр вара. Мăнастирте апла ирĕклĕх мар пулсан та пĕтĕм çурта пар! тустараттăмăр. Манехве пырса кĕрсен шăппăн кăна турă йуррисем йурлаттăмăр, тухса кайнă кайманах ҫăл-пар! тустараттăмăр. Кам та пулин. манашка кĕрейменнисенҫен:

Ентĕ вăрман кашлаť, вăрман кашлаť.
Туратран турата кайасшăн.
Ентĕ сар хĕр йĕрет, куçне шăлаť
Савнă сар аҫине кайасшăн.
Тесе йурласа та йараť.

Н а ç т у к—Иртсе-çŷрекен сутăçăсем кĕрет-ҫĕç-и?

Х ҷ ў к к а—Кĕркелетҫĕç.

Н а ç т у к—Ăçтисем?

Х ҷ ў к к а—Тĕрлĕ çĕртен. Пĕри Мускавсем шăлт ухмахлантарҫĕ. Килмессерен куҫҫенеç кўретҫĕ. Ытарма та çук авансkер. Варвари манашка астăван пулĕ шăлт пуçне çухатрĕ. Лешĕ кайсан ҫут вакка сикмерĕ.

Н а ç т у к.—Хусансем çŷретҫĕç-и?

Х ҷ ў к к а—Çŷретҫĕç те лешсем мар.

Н а ç т у к—Апла Пегĕр Степанҫ килмерĕ-и?

Х ҷ ў к к а—Çук. Кирлех те мар! Епĕ ăна пăрахас тетĕп.

Н а ç т у к Мĕншĕн апла?

Х ҷ ў к к а—Унтан пуçне тĕнҫе хĕсĕр мар вĕт. Урăххине тупас тетĕп.

Настук—Мĕн пирки? Есĕ йуратсан, пĕрнех йурат.

Хљўкка—Тупрăн вĕт. Вăл сантан култăр иккен те, есĕ ăнах йурат. Ак куна курмасă-и? (Ђышкă кăтартат). Акă Шипайĕх Васукне йуратсан та пырат. Пĕлĕ вара!

Настук—(Пĕлмĕш пек пулса) Мĕнле Шипайĕх?

Хљўкка—Ех Настук! Маннă та. Сан куç умĕнђен çухалсан пуçăнтан та тухса ўкет иккен. Ху ăна.

Настук—Ухмăхланнă çав. Каллех есĕ пуçланă-ђђĕ.

Хљўкка—Йурĕ еппин. Епĕ пуçларăм пултăр. Анђах есĕ пит ђас мана пуçлан, йе тата кама та пулин йуратмастăн-и?

Настук—(Ђĕнмест).

Хљўккă—Савни тупмарăн-и? Мĕн ђĕнместĕн? Настук кала тетĕп, пулăшăп та тĕн, кала ĕнтĕ. Епĕ никама та каласс çук. Хăна кăшт çăмăлтарах пулĕ, ђĕрў кăшт лăпланĕ. Кама йуратрăв? Йуратрăн-и, кала?

Настук—(Майĕпе) вара.

Хљўкка—Кама еппин? Мĕн йатлă? Ăçтисем? Акă йатне каласанах ђĕрў лăпланĕ, кала тетĕп.

Настук—Еђуш.

Хљўкка—Кам вара вăл?

Настук—Пирĕн патăрта тарçăра тăрат. (Укçине кĕрет, хĕрсем уйăрăлаççĕ).

## 2 мĕш курăнни.

Настук, Хљукка, Укçине.

Укçине—Епĕ сире ђей хатĕрлеме йатăм, есĕр нимĕн тумасăрах ирттернĕ. Ех хĕри-пăраç!

Х ӆ ў к к а—Укҫине аппа, каласса кайрăмăр та шăлтах мантăмăр, аса та килмерĕ.

Н а ҫ т у к—Тус вĕт, курманни нумай пулаť.

У к ҫ и н е—Пулăшăр еппин. Наҫтук, сăмавар илсе кĕрха, есĕ (Наҫтук тухса кайаť) Хӆўкка савăт-сапа, ҫиме лартгкала. Мĕн ҫинђен шавларăр. (Наҫтук сăмавар илсе кĕрет, Хӆўкка сĕтел ҫине ђăшкăсем лартаť).

Х ӆ ў к к а—Хамăр пурăнăҫ ҫинђен каласкаларăмăр. (Пот. Мак-ђă ун хыҫҫăн Манехве Праски кĕреҫҫĕ)

## 3 мĕш курăнни.

П о т. М а к.—Укҫине ырантан пĕр куна Пантелейе посара йарас пулаť. Пĕр виҫ-тăват тушка аш илес пулаť. Асту ан ман.

У к ҫ и н е—Ах турă, ăҫта кайма виҫ-тăват тушка!

П о т. М а к—Сан менелникне улпутла ирттерсе йарас тетĕп. Ăнтан кайтăр. Спешкăх Танили, кунти йăласенђен тĕлĕнтĕр.

У к ҫ и н е—Мĕнле йăла?

П о т. М а к.—Ђухăнсене тăрантарасси. Пĕтĕм йала пухас тетĕп. Куртăр вăл ман пурлăха, ман вăйа. Хăйне хăй епĕ купте тесе пуҫне ытла ҫўлĕ ан ҫĕклетĕр! Ăнлантăн-и?

У к ҫ и н е—Мĕне кирлĕ-ђђĕ. Михалў кунне халăха ҫитĕреттĕмĕр-ђђĕ вĕт. Те Ҫимĕке кĕрекесĕр ирттерес, тет.

П о т. М а к.—Ун ђухнехи хăйне хăй, халђхи хăйне хăй. Каларăм сана, есĕ итле, сăмах ытла ан вакла!

У к ҫ и н е—Ђелетĕп, аппĕ, пĕлетĕп. Мĕн тăвас тенине тăвах. Сан ирĕкў.

П о т. М а к.—Хамăн ирĕк икенне санран пуҫне те

пĕлетĕп. Тытăнсан пиншерĕн кашни куп çитерĕп пĕтĕм урамсене сĕтелсем лартса тухăп, кĕтӳ сысна ђикĕп, кĕтӳпе такасурăх пусăп. Сан ĕç мар вăл! Хĕр-арăм ĕçĕ-çăвара карса, хăлхасене сарса итлесе ларасси, асли хушнине тăвасси!

Манехве—Мĕн есĕ хăна ху ђăтаймастăн. Пĕр сăмах калама çук вĕре те пуçлатăн.

Пот. Мак. Санăн та, çветтуй ђун, итлес пулаť. Упăшкипе арăмин мĕн пулмасť. Пур çĕре те сăмсана тĕртсе çӳрени ман кăмăла каймасť. Итле, Укçине пур йенђен те тулли пултăр Намаса ан хăвар. Асту епĕ сана! Айак пĕрђӳсене хыпалакалăп. Илтрĕн-и?

Укçине—Хам ĕçе пĕлетĕп ĕнтĕ.

Пот Мак.—Çапла çав. Хăлхусене ђăнк! тыт! Пите кĕççе ан çĕлет.. Тĕнђене ăнтан йарăпăр. Йурă, ташă пуçлăпăр. Арçынла ура хуçса ташлăн-и Укçине? Е? (арăмне халпуççирем саваť).

Укçине—Мĕн хăтланан, те ухмаха тухнă? Сухална аса ил, выђама тапратаť, çамрăклантăн-и? Кай ман куç умĕнђен, пуťсĕрскер!

Пот. Мак.—Ан ђăрăлтат! Шуť туии темĕскер мар вĕт, елле хуллу татăлса ăнђĕ-им?

Укçине—Кĕççе пит, тупнă вĕт шуť. Кăшт хĕрсенђен вăтан, хĕрӳсем ӳссе çитĕннĕ. Ват-супнăскер, намăссăр.

Пот. Мак.—Мĕн вĕсенђен намасланмалли пур. Ђим, акă карђа кайсан пиртен ытла вылĕç. Наçтук кил-ха. (Наçтук пыраť). Упăшку санпа выђа пуçласан çиленĕн-и? Е?

Наçтук—Манăн упăшка пулас çук.

Пот. Мак. Пĕлеймерĕн. Епĕ сан валли кађђă та тупса хутăм, пан-улли пек, ытараймăн Ђуп-тăвасси килнипе ђĕлхӳне çăтса йарăн. Акă анну мелникне килĕ, курăн-ха!

Настук—Епĕ ăна каҫҫа кайас ҫук.

Пот. Мак.—Хăна хăвах сиксе кайасси ҫăнахах та пулмĕ. Асу-аннӳ парĕ. Ĕмĕр хĕрте лармăн. Ех-хе,-хе, хĕри пăрас! Хăй ăшĕнҫе: „каҫҫа кайас, каҫҫа кайас“, самахĕпе, „каймастап“, пĕлетĕп епĕ сире хĕри пăраса.

Уксине—Ашшĕ, ан тив хĕре! Настук ахаҫ те пĕтсе кайрĕ. Ҫак ерне хушшинҫе шăлтах шурса кайрĕ, ĕҫмес-ҫимес, куласси тăвасси те ҫук.

Пот. Мак.—Йунĕ вĕрет. Хĕр ҫирне пĕлместнем? Ак каҫҫа курĕ те пĕтĕм ҫарĕ вĕҫсе тухĕ! Йунĕ вĕрет.

Уксине Мĕн хĕре мăшкăллан, мĕн асаплантаран? Ҫитĕ. Кĕрекесем тăвитҫен кăшт хĕрĕ ҫирленине астуса илесҫĕ, тура сывлăх патăр тесе ыйткалакансене кăшт валеҫесҫĕ. Ҫухăн келли турра ҫитет!

Пот. Мак.—Кам сана вĕсене валеҫме ҫарат. Кĕреке кĕрекепе, ыйткалакан ыйткалаканĕпе. Настука тура аван каҫҫа патăр тесе валеҫех

Уксине—Тупнă вара сăмах. Урăх сăмах пĕлмен пек кирлĕ-мара тăсат. Ҫын сăмахне итлес-ҫĕ. Ав Манехве мăнастирте пуранăҫ пит те хĕсĕвсе ҫитрĕ тет Ҫиес-ĕҫес килет, илме вырăн ҫук. Гĕсем ҫинҫеп шухăшласа пăхасҫĕ.

Манехве—Пуранăҫ калама та ҫук, йăвăрланса ҫитрĕ. Йапала хакĕ ӳснĕҫем ӳсет, пирĕн ниҫтан тупăш ҫук. Тĕнҫе тăрăх хутаҫ ҫакса ҫӳрессе ҫитрĕмĕр ĕнтĕ

Пот. Мак.—Мĕн ҫухлĕ вара сирĕн ҫав ҫветтуйсем?

Манехве—35 ҫын.

Пот. Мак.—Апла ме сана 35 тенкĕ, пĕрер тенкĕ парса тух.

Манехве— Тавта пусах. Христос тура ҫăлтăр сана!

Уксине—Ку акă ĕҫ пулҫĕ. Ыгти мăнастерсене тата.

Пот. Мак.,—Есĕ, Укçине, пĕлнĕ пĕлменех ытла ан йĕр. Вĕсем пиртен тутă пуранаççĕ. Итле вĕсене, вĕсен куç-çулĕ çĕлен куç çулĕ. Епĕ пĕлетĕп кăшт кăна.

Манехве—Çылăха ан кĕр, шăллăм! Курайман тăшман мĕн каламĕ, пирне те итле-ха. Укçине кин ђăн калаť, ĕçме-çиме çук, тулмир-мĕн пĕтнĕ...

Пот. Мак.—Тыгăнђĕ сăрнайне тăсма. Ме еппин тата çирĕм пиллĕклĕхне Пĕр пек уйăр. Хђўкка есĕ мĕн лăпăртататăн-ха?

Хђўккă—Ман ĕçессĕм килмест.

Пот. Мак. Мĕн ĕç?

Хђўккă.—Витĕнмелли çĕлетĕп, Укçине аппа менелникне пĕтересех пулаť, тĕртсе тумалла тĕррисене, ĕç нумай.

Манехве—Есĕ кайса тĕрткеле, çĕлекеле. Хлўкка (тухса кайаť, Наçтук хуйхăрса лараť).

Пот. Мак.—Есĕ ђăвах та ђирлерĕн-и вара (Наçтук патне пыраť) Мĕн сĕнксе ларатăн?

Манехве—Шăлтах шурса кайнă. Ман патăмра пурăннă ђух хăмла çырли пек хĕп хĕрлĕ-ђђĕ, ашине килĕнђе пĕтсе кайнă!

Пот. Мак.—Мĕн ыратаť.

Наçтук—Нимĕнех те çук.

Пот. Мак.—Ђим-ха, пĕрре ђунтан калаçар. Каласа пар хуйхăна аçу пулăшĕ тен. (Наçтук куç-çуллине шăлаť). Мĕн ђĕнместĕн хăлхаран кала хуť. (Хĕрин пуçне хăйен çине хураť).

Наçтук—Нимĕне те курассăм килмест, атте.

Пот. Мак.—Вăл кăна пулсан емеллейĕпĕр. (Хĕрне пуçĕнђен шăлаť). Ан йĕр хĕрĕм, ан йĕр, ђунăм, пĕр йапала каласа савăнтарам-и? Кăшт вăхăтлашĕнђĕ те каласах пулĕ.

Игле, каҫҫӑ кӗт. Анну менелникне килетех. Илтрӗн-и? Калама ҫук ҫӑперскер, пуйан, ытараймӑн. Улпутла пурӑнӑн, кӗмӗл-ылттӑн тумланӑн. Мӗн ҫӗнместӗн? Савӑннипе ҫӗлхӳ хытса ларҫӗ-и?

Н а ҫ т у к—Ҫук, атте, епӗ ӑна каймастӑп. Ху хӗрне ху ан пӗтер.

П о т. М а к.—(Ҫилленсе) Аҫу хушсан, кайӑп.

У к ҫ и н е—(Наҫтук йӗнине кура). Наҫтук, ҫарӑн. Аҫу сана йуратат, ырӑ тума тӑрӑшат. Ан йӗр пикеҫӗм, ҫарӑн!

Н а ҫ т у к—(Ашшӗ патне пырса хытӑ сасӑпа) Атте, есӗ ман валли пасарта шыраса тупнӑ каҫҫа каймастӑп. Хуть те кӑна мӗн ту, пуссан та каймастӑп. Манӑн хамӑн пур, хам тупни пур, унтан пуҫне урӑххине каймастӑп.,

П о т. М а к.—(Сиксе тӑрса) Мӗн тен? Каҫҫӑ пур? Есӗ ҫапла-и? Епӗ сана персе вӗлерӗп, путсӗр, мӗнле каҫҫӑ, кала!

Н а ҫ т у к—(Ҫав сасӑпах) ҫук атте, есӗ уна тивеймӗн, халӑнтан килмӗ.

П о т. М а к.—(Ҫӑмӑрне кӑтартса) Тӑр! тустарса йарип ҫен кала кам вӑл?

Н а ҫ т у к—Манӑн каҫҫӑм пӗлӗг синҫе, епӗ ӑна кайма сӑмах патӑм. мӑнастире кайатӑп.

П о т. М а к.—(тӗлӗнсе) Ҫветтуй ҫурт-ҫураман, ку сан ӗҫӳ. Мӗн есӗ ун пуҫне тӗрлӗ кирлӗ кар шухӑш тултарнӑ? Ун пуҫӗ тултармӑш терӗн-им? Епӗ сана!

М а н е х в е—Епӗ пӗр сӑмак та мӑнастире кӗресси синҫен каласман, каласма мар, епӗ ӑна пиллеместӗп те. Наҫтук ан васка. есӗ ҫамрӑк-ха, ҫӑтаймӑн. Сан пеккисене пирӗн илме те йураймаст.

Н а ҫ т у к—Атте есӗ сан мӑнастир а ӑкӗ патне ҫара рӑн, ҫӗҫӗк-ҫатӑк тумтирпе пырса тӑрса каҫҫӑ патне йама

хушсан, хапхуна питĕрсе лартăн-и, йе кĕнĕ пулсан, йăтта хăваласа кăларнă пек, хăваласа кăларăн-ь?

Манехве—Çук. Христос хăй патне пырakaна кÿртме хушнă. Манăн сана илес пулать.

Пот. Мак.—Апла пулсан, çветтуйсккер, итле ман сăмаха. Настук йе сан патна, йе урăх мăнастаре кĕрсен, сирĕн йăварсен куне пĕтĕ. Есĕ ăна пĕлсех тăр, пĕр! тустарăп, ырăнне шыраса тупаймăн. Илтрĕн и! Епĕ сăмаха калла тума йуратмастăп.. Настук есĕ вăл ухмах шухăша пуçăнтан кăларса пăрах. Малашне ун пек сăмах ан илтем! (Алăкне хытă хупса тухать. Ђарăнса тăраççĕ).

Укçине—(Праскийе) Праски, аппуна кăшт ÿкĕтле, астуха вал йепле хуйхăрать.

Праски Анне, мĕн хуйхăрмалли пур? Атте мана кађђă кÿрĕп тесен епĕ ташша йарăттăм, кађђа хирĕç тухса илĕттĕм!

Укçине—Ах турă, намăссăр, ăçтан есĕ çав кирлĕ мара вĕренсе кайнă. Асту-ха! Акă шăпăр илĕп те шăммусене шăлт ислетĕп! Хĕрте-хĕрте ăнтан йарăп.

Праски—Мĕншĕн вара Епĕ пĕр те шут тумастăп. Кађђă Настук кăмăлне каймасан парăр мана. Епĕ ђанахах ташла-ташла кайăп.

Укçине—Ах путсĕр пархатарсăр! Тĕлхÿ хытса ларасшĕ. Епĕ аçăр умĕнђе сирĕн хута кĕретĕп. Тин сăпкаран тухнă-ха тетĕп. Вăла ах намăссăр. Ак аçăва калам-ха, ђĕррĕн çисе йарĕ.

Праски—Çимĕ

Укçине—Кăрђанкуна пĕтерĕ.

Праски—Пĕтермĕ. Илтсен ђуптуса илĕ.

Укçине—Тарăн! Ах турă, хĕр пулђĕ-и-ха ку?

Манехве—Ан çилен, пурсăмарта çаврăк пулнă-çке.

Укçине—Ах турă, турă! Настук есĕ ђашкă-тирĕксене шăлкала-ха. Епĕр Манехвепе мунђана кайар. Хљўккине халех йарăп. Ес те пырăн мунђана. Аŏа Манехве (тухса кайаççĕ, Манехвепе Праски Хљўкка кĕрет).

## 4-мĕш курăнни.

### Настук, Хљўкка, Укçине.

Укçине—Хљукка килтĕн-и? Епĕр мунђана кайатпăр, есĕ кăшт астукалама йул-ха. Праски килсен пырăн.

Хљўкка—(Тайăлса) Йурĕ Укçине аппа.

Укçине—(Хуллентерех). Есĕ кăшт Настука йăпаткала-ха култар-ха. Есĕ Хљукка пит те вал тĕлĕшпе маттур вилнĕ сынна та култаран, вилессине савăнтаран. Кăшт кăна есĕ ăна мĕн ту-ха.

Хљўкка Йурĕ-йурĕ.

Укçине.—(Тата хуллентерех) Ăптан кайрăм ĕнтĕ. Темĕн пулђĕ. Те куçăхнă, те тата.

Хљўкка—Ан хăра, Укçине аппа, пур хуйхине пусĕнђен кăларам.

Укçине—Турă кăна сана пулăштăр-ђђĕ çав. (Тухаŏ, Хљўкка каллех тайăлаŏ).

## 5-мĕш курăнни.

### Настукпа Хљўкка.

Хљўкка—Халĕ епĕ пĕр сар хĕрĕн савнă тусĕ ăçта

ĕçлениие пĕлтĕм. Иккĕмĕш пӳртре, унтан мунҫа патне пĕҫĕкçĕ пӳрт турăм.

Наçтук—Мĕн валли, мĕншĕн?

Хљӳкка—Кирлĕ пулмаст-и? Мĕн те пулин каламалли систермелли пулсан ăçта курăн? Капла епĕ вырăнне пĕлетĕп.

Наçтук—Мĕн систермелле, те есĕ ухмаха тухнă, те?

Хљӳкка—Калаçан вĕт. Йе сан типсе хăрса каймалла вара? Сире йепле те пулин калаçтарса пăхтарас-ха. Пĕрре тĕл тумасан çын та пулмастăп. Ăна та шелле пулат. Сана курса калаçасшăн шăлт ухмаха тухнă.

Наçтук—Вăл ман çинҫен шухăшламастӗ та пулĕ-ха.

Хљӳкка—Есĕ ăна ухмаха хуратна? Сан пек илемлĕ хĕре, сан пек маттура кам йуратмĕ? Сана курасшăн çав пљуш çур ĕмĕрне шеллемĕ. Асту-ха, кăпăк мар-и, ҫеҫек мар-и вара есĕ. (Наçтука кăтăклат).

Наçтук—Сана кулă-çке, манăн ҫĕре çуралат. Ака хай тункатана кӳреççĕ те уйăрса йараççĕ вара.

Хљӳкка—'емĕн? Халĕсенҫен килĕ-ши? Пурне те уталăпăр, пурте типсе йулĕç. Кăларса, вăрласа туй тăвăпăр. Пĕр шухăшра çеç пултăр, ĕçĕ те пулса тăрĕ.

Наçтук—Пит те аван калăтăн та ĕненессĕм килмест-çке. Куртăн-и атте мĕнле кăшкăрса пăрахрĕ.

Хљӳкка—Кам хушнă сана апла хăтланма? Ху ухмах. Мăнастире тупнă сăмах. Пырса перĕн-ха. Пĕтĕм мăнастир таврашĕнҫен улăм пĕрҫийĕ те йулас çук. Пурте ăна итлеççĕ, ун сăмахне тăваççĕ. Ăна уппа харатаймăн!

Наçтук—Хам та пĕлместĕп, таçтан пуçа килсе кĕҫĕ çав мăнастир, пĕтĕм йатăм..

Хљӳкка—Есĕ ăна хăрат урăхла. Анҫах йĕрес тăвассине пăрахас пулат, куç-çуљ мĕлки те ан пултăр.

Н а ç т у к — Мĕнле вара?

Х ӆ ӳ к к а — Паçăрхи пекех малтан мăнастир çинҫен тăпратса йар. Мăнастире йамасан епĕ хама хам пĕтеретĕп: йе çакăнса вилĕп, йе йерĕшке тупса килтен тарăп тейес пулат. Малтан вăл кăшкăрĕ те, çапса та йаркалĕ, анҫах мамăкран çемçе пулса кайĕ, тупата турă çемçелĕ.

Н а ç т у к — Аттене те шел.

Х ӆ ӳ к к а — Еӆушу шел мар-и?

Н а ç т у к — Ана шеллеме кăна мар, пуçăма касма парап.

Х ӆ ӳ к к а — Аçăна ытларах шеллесен, пасарта тупнă каҫҫине кай еппин.

Н а ç т у к — Ăна кайиҫҫен мăйа ҫул çыхса вакка сикĕп!

Х ӆ ӳ к к ă — Аçуна та çаплах кала. Çинҫен тухса кайап тесе хăрат. Пуйансем апла каланине пит йуратмаççĕ. Есĕ хăрамасăр хуллен кăна çапла каласа хурсан вăл йăптăхне тăкĕ. Пĕр те хăрас пулмаст!

Н а ç т у к — Йурĕ тусăм.

У к ç и н е — (Сасси) Аҭа ҫасрах, Наçтук, мĕн çухалтăн.

Н а ç т у к — Пыратăп. (Тухса кайат).

Х ӆ ӳ к к а — (Алăксем айĕнҫе итлесе çӳрет) Пурте кайрĕç пулмалла. (Тултан кĕрекен алăк айĕнҫе итлесе) Кам унта çӳрет. (Пăртакçă уçса) Кам çӳрет унта?

Е ӆ у ш — (Сасси)-Епĕ Хӆӳкка аппа, праçнăк валли тумаллисем пурҫĕ.

Х ӆ ӳ к к а — Йĕкĕт, кил-ха кунта.

Е ӆ у ш — (Сасси) Мĕн шырама?

Х ӆ ӳ к к а — Куç кĕски татăлса анат, пăта çапмалла, ҫасрах. Килте никам та çук. Мĕн хăран, ухмах! (Еӆуш кĕрет).

## 6-мӗш курӑнни.

**Еԓуш**—Мӗн кирлӗ?

**Хԓӳкка**—Мӗн ҫӗмӗрттерсе пурӑнан йӗкӗт?

**Еԓуш**—Хуллен ҫӳрекелетӗп!

**Хԓӳкка**—Сана салам калама хушрӗҫ.

**Еԓуш**—Кам?

**Хԓӳкка**—Пӗлмен пулаӗ, Хӑй хӗре ӑнтап йанӑ та, кам тесе ыйтаӗ тата. Ђунсӑр! Ҫакса вӗлересђӗ сана.

**Еԓуш**—Кам ҫинђен есӗ калаҫан, тупата турӑ ӑнланаймастӑп.

**Хԓӳкка**—Ман санпа лӑпӑртатма вӑхӑт ҫук. Наҫтук салам калама хушрӗ. Вӑл сана пит те йуратнӑ, шӑлт ухмаха тухнӑ. Ех.. йӗкӗт, йӗкӗт, намӑс мар-и тукатмӑшласа ҫӳреме. Пӗрре пӑхнӑ та, хӗр ђӗрине сурнӑ. Санран салам калас-и?

**Еԓуш**—Кала, ђунӑм, тархасшӑнах кала. Хам та епӗ ҫӗрӗпе ҫывӑрмасӑр ирттереп, ӗҫес-ҫийес килми пулђӗ. Пӗр ун ҫинђен ҫеҫ шухӑш.

**Хԓӳкка**—Ак ҫак кунсенђе курса хӑйне калӑн.

**Еԓуш**—Тархасшӑн кӑтарт, тӗл ту. Ӗмӗр тав тӑвӑп.

**Хԓӳкка**—Кайран тав-тӑвӑн.

**Еԓуш**—Мана вӑл йуратас ҫук.

**Хԓӳкка**—Санран пуҫне урӑххине вӑл йуратмаӗ, урӑххине пуссан та кађђа каймӗ.

**Еԓуш**—Епӗр пӗр-пӗрне йуратсан та мана ӑна парас ҫук. Вӑл пиве, епӗ тарҫӑ. Хуҫа тарҫине хӗрне парас ҫук. Хуҫа вӑл улпутах, улпут хӗрне хӑй хресђене памаӗ.

**Хԓӳкка**—Ех йӗкӗт, хӗр ђӗрине пӗлместӗп. Йуратнӑ йӗкӗтшӗн хӗр нимӗнпе те шеллемест. Ирӗкпе памасан, тухса

пырĕ. Акă çăва тухăр-ха. Авлантарса йарăпах. Вăл сана каймасан, урăххине кайас çук. Ашшĕ тупнă каҫҫи çăварне карса, сăмсине тăсса кайĕ-ха. Илтрĕн-и йĕкĕт.

Е љ у ш—Хљўкка, есĕ мана Наçтука тупса парсан епĕ сана ылтăнлăп.

Х љ ў к к а—Мĕнпе?

Е љ у ш—Епĕ сана ҫуп-тусв илĕп! (Тытса ҫуп-тăвать).

Х љ ў к к а—Ех намăссăр. Наçтук тусĕ пулмасан епĕ сана кăтăртăттăм-ҫҫĕ, майран пăвса илĕттĕм. (Алăк умĕнҫе сăсă илтĕнет) Мунҫаран килҫĕç. Ісç ҫасрах йĕкĕт!

Е љ у ш—Сывă пул! (Тухса кайать).

*Ҫаршав.*

# Виççĕмĕш пайĕ.

## 1-мĕш курăнни.

### Н а ç т у к п а П о т. М а к-ҫ.

П о т. М а к.—Епĕ йурийех санпа калаçас тесе килтĕм. Есĕ, хĕрĕм ман çине ытла ан çилен. Пĕр кун епĕ кăшт тапăртатса илтĕм, есĕ аçу сăмахĕсене ытла ҫĕре патне ан ил.. Ытла ан хуйхăр.. Шăрçа илсе парас мар-и?

Н у ç т ў к—Кирлĕ мар мана нимĕн те, ман ахаљ те санран ун пек йапала нумай, ман ирĕке кăна ан тив.

П о т. М а к.—Мĕнле ирĕв?

Н а ç т у к—Ман хĕр ирĕкне ан пĕтер.

П о т. М а к.—Акă ĕнтĕ утмăл йенне кайрăм, тупа та

турă, çав хĕр ирĕкĕ çинђен пĕр сăмах та илтмен. Пирĕн атте анне вăхăђĕсенђе çав хĕр ирĕкĕ илтĕнмест ђђĕ. Мĕнле хĕр ирĕкĕ тупăннă вара хађхи саманара? Ăнлантар-ха хĕрĕм, есĕ мана!

Н а ç т у к—Хĕр ирĕкĕ акă мĕн. Пĕр кун есĕ ман валли пасартан кађђă тупса килнĕ ђђĕ, хăй Снешкох-и мур и вара, астăвмастăп, аставассăм та килмест. Ман кăмăла вăл пĕртте каймастĭ, Епĕ ăна кађђа кайас çук. Епĕ йуратнине кăна кађђа кайăп Ак çакă хĕр ирĕкĕ пулаť ĕнтĕ.

П о т. М а к.—Есĕ Снешкоха курман вĕт-ха. Кам пĕлет, шет кăмăлна кайĕ те. Çамрăк, пултăклă çын.

Н а ç т у к Çамрăккине çамрăках пултăр. Курман, пĕлместĕп, пĕлменнине тавлашас та çук Аслăши вăл вара? Акă ăна пĕлместĕп.

П о т. М а к.—Епĕ сана аслă тетĕп. Йе аçуна ĕнепместне?

Н а ç т у к—Ĕненессе, атте, ĕненетĕп. Анђах калас-ха мана килĕшнĕ ђух, ăçта кайнă унăн ăсĕ Йепле вара вăл мана пĕр курмасăр илме хапăл тунă? Курмасăр вăл епĕ илемлине, хăрушшине пĕлмест вĕт? Калаçса пăхмасăр манăн ăса ăçтан пĕлтĕр-ха вăл? Пуйан çыннăн хĕрĕсем пуррине вăл илтнĕ те, тŷрех килĕше те пуçланă. Атте çав тĕрлĕ çынпа телей курăн вара? Кала-ха?

П о т. М а к.—Килĕшнĕ çĕрте вăл хăй пулман. Епĕр унăн ашшĕпе ĕç тума тытăннă ђђĕ.

Н а ç т у к—Ваттисем тунă иккен. Туй туса йарар та ађасем вара мĕнле пулĕ, çапла пурăнђăр тенĕ пулаť Атте кала-ха есĕ мана. Йепле сирĕн çав туй çинђен сăмах тапранђĕ. Кам пуçларĕ, есĕ-и, Снешкох-и?

П о т. М а к.—(Ђĕнмест).

Н а ç т у к—Атте, есĕ пуçласа йаман вĕт? Ху хĕрŷ ва-

лли пуйансевҫен каҫҫа тархасласа ҫӳрес ҫук вӗт есӗ? Ху хӗрне ху сутас ҫук вӗт? Кала-ха.

Пот. Мак.—(Ура ҫине тӑрса уткаласа ҫӳрет) Кирлӗ ма́ра калаҫан есӗ, Наҫтук. Мӗн лапӑртата пуҫларӑн есӗ.? Хам хӗре сутма́, епӗ ыйткалакан-и? Ҫитес сура́х-уриҫҫен епӗ сана туй ҫинҫен пӗр сӑмах та калас ҫук. Вӑл вӑха́та шухӑшлакаласа пӑхӑн. Унта мӗн тӑвасси паллӑ пулӗ, курӑнӗ. Ан хуйхӑр, ҫунӑм. Есӗ ӑслӑ вӗт.

Наҫтук—Атте, ан ҫилен ман ҫине.. епӗ сана ҫилентервине каҫар. (Ашшӗ кӑкӑрӗ ҫине тайӑлать).

Пот. Мак.—(Уп пуҫне шӑлса) Мана та каҫар (ҫуптӑвать.

Наҫтук—Анҫах, атте есӗ мана ирӗксӗрлесе каҫҫа парӑсшӑн пулсан.. сывӑ пул, епӗ хама мӗн те пулин тӑватӑпах!

Пот. Мак.—(Ҫиленсе) Мӗн тӑвӑн вара?

Наҫтук—Мӑнастире кайӑп та хура тумтир тӑхӑнӑп, унтап калла киле ҫаврӑсан хама хам пӗтерӗп.

Пот. Мак.—Асту-ха мӗн шухӑшласа кӑларнӑ?

Наҫтук.—Наркӑмӑш ӗҫӗп. Мана ҫулҫыхса шыва сикӗп. Апла пулмасан, ытларах та тӑвӑп. Тухса каҫҫа кайап. Кам куҫа тӗл пулнӑ ҫавӑнпа тарӑп. Тытсан-кӗрт пуха пуҫлӑп ҫупа пуҫлӑп!

Пот. Мак.—Наҫтук, мӗн калаҫан? Асу ӑҫта? Ҫав сӑмаха патлаттарса йама ҫӗлхӳ йепле ҫаврӑнҫӗ?

Наҫтук:—Епӗ сӑмахран кӑларӑм.

Пот. Мак.—Ухмах шухӑша кӑларса ывӑт пуҫантан.

Наҫтук—Епӗ кайатӑп, атте! (Тухса кайать).

Пот. Мак.—Пит те кутӑн, калама та ҫук тытамаклӑ! Пӑхма лӑпкӑ, калаҫса пӑх-ха.. мӗнле ҫӑхӑмҫӑ? Тупрӗ вӗт

сӑмах., тухса кайӑп Кайрӗ те. Кашкӑрса туса ӑна, ҫӗлтереймӗн, пушӑпа та нимӗнех те тӑваймӑн, ҫӑпахах та тӗмӗн туса хурӗ, йата йарӗ. Савас пулат. Кӗрт пухӑп. Ну хӗрте. ҫупа пуҫлӑп. Сӑмах та ҫке! (Тухса кайат).

Н а ҫ т у к—(Кӗрет) Кайрӗ. Ех турӑ кӑмӑл пӑгрӑнат мӗн тӑвас?

## 2-мӗш курӑнни.

### Н а ҫ т у к п а Х љ ӳ к к а.

Х љ ӳ к к а—Маттур та. Пултаран, халӑнтан килет! Аҫуна ӑнтан йатӑн. Мӗн калаҫнине пӗтӗмпех алӑк патӗнҫе итлесе тӑтӑм. Каларӑм вӗт х ӑ р ӗ тесе, ҫӑн пулмарӗ-и?

Н а ҫ т у к—Аттене шеллетӗп. Куҫне кӳрӑнма намӑс ӗнтӗ.

Х љ ӳ к к а—Тытӑнҫӗ сӑрпайне тӑсма. Кайса каҫару ыйт еппин. Атте, каҫар, урӑх ухмахланмӑп, пайанах есӗ тупнӑ каҫҫа кайӑп, те. Ан ухмахлан. Вӑхӑтлӑха туйне хӑварни пит те аван.

Н а ҫ т у к—Мӗн тӑвӑн-ха вӑхӑтланипе? Кайран кайасах пулӗ

Х љ ӳ к к а—Кайас пулӗ, анҫах Елљуша кайӑн.

Н а ҫ т у к—Мӗнле вара?

Х љ ӳ к к а—Тухса кайӑн. Есӗ Наҫтук, ан йӗр, куҫ-ҫул ан тӑк, хӗрлӗ питне ан шӑрат. Аҫупа паҫӑрхи пек калаҫ, ӗҫӗ хӑйех пулса тӑрӗ. Илтетне?

Н а ҫ т у к—Илтетӗп.

Х љ ӳ к к а—Хӑйулӑ пул. Ҫийеле тухӑн. Аҫу сисеймӗ те. Аннӳ ахлаткалӗ те иртсе кайӗ.

Н а ҫ т у к—Вӑл пирӗн хӑш ҫух кӑшкӑркаласан та, пит

ырă çын. Аппене хирĕç пыма вăй çитес çук. Ана ђунтан каласа кăтартасах килет.

Хљŭкка—Ан та шухăшла! Манран пуçне ку ĕç синђен пĕр çын та ăн пĕлтĕр. Пĕтĕм ĕçе пĕтерĕн.

Настук—Ех, Хљŭкка, ђĕрем ыратать. Мĕн тунине те пĕлместĕп. Тĕлĕкри пек çŭретĕп.

Хљŭкка—Апла пулсан пайанах вăратăп Акă курăнха вăратăп!

Настук—Хуйхăра-хуйхăра шăлт типсе-хăрса кайрăм. Мĕн те пулин урăххи синђен шухăшлама тытăнсанах, Еђуш куç умне килет тăрать! Ђĕрене çурать!

Хљŭкка—Пуçран каймас-и?

Настук—(Хљукка хул-пуççи çине тайанса, хуллен) Çапла çавă.

Хљŭкка—Сан Еђуша курса калаçас пулать. Ĕнер каçпа епĕ ăна куртăм сана салам калама хушрĕ.

Настук—Ђăн-и? Мĕн терĕ? Кала-ха?

Хљŭкка—Мĕн калама, ху курса калаçăн-ха.

Настук—(ыталаса). Тархаштăнах кала, ђунăм!

Хљŭкка—Çитĕ, пăрăн, усал, вĕлеретĕн. Ех ђатăмсăрскер!

Настук—Мĕн терĕ вара? Ђăнах ђун ђатмасть! Кала!

Хљŭкка—Сана йурататăп; хуйхăратăп, тĕнђере пурăнас килмест, пасар кађђинђен хăратăп терĕ. Сан ана ђĕнсе илсе калаçас пулать, ђĕрине пусарас пулать.

Настук—Мĕнле вара?

Хљŭкка—Илсе килем-и?

Настук—Ан калаç, атте курсан вĕлерĕ.

Хљукка—Ан хăра-аçу хăйех ăна кунта йарĕ.

Н а ç т у к—Тупан вĕт. Сана итлесе хăлхасем шанаççĕ. Мĕнле майпа атте ăна кунта йарĕ-ха?

Х ӆ у к к а:—Йамасан çын та пулмăн. Куçа лаҧ сурса тултар. Каҧҫă килĕ. Асту авантарăх калаçса пăх, ăна ан хăрат, ан хурлантар, ахаӆ те сăмсинҧен тытсан ҧунĕ ту хасса çитнĕ.

Н а ç т у к.—Есĕ йалан шуйĕ тăван, култаран, анҧах малашнехи хăратаĭ, çултăлак иртĕ. есĕ аттене вирлĕ тăма вĕрентрен пулсан та, вăл туй çинҧен тапратĕ. Мĕн пулĕ ши çак çултталăк хушшинҧе.

Х ӆ ў к к а Çулталăк хушши 365 кун, епĕр çуркуннех ĕç тăвăпăр. Минҧет туса йарăпăр та.

Н а ç т у к—Кирлĕ мара ан авăр!

Х ӆ ў к к а—Мĕнле кирлĕ мар. Аçуна калана пек тухса калăн та ĕç пулҧĕ те. Вăл ман ĕç, есĕ мана итле кăна. Хай каҧҫă килсен ан пытан, калаçма тăрăш самах хушшинҧе мăнастире кайма шух шлатăп те. Çула пирĕн тата пыр.

Н а ç т у к—Мĕн тăвайăн ши ьара апла?

Х ӆ ў к к а—Мĕн тăвайăп-аçу çула Атăл çине кайсан сана Еӆуша каҧҫа парăп. Еӆуш хăрас çук.

Н а ç т у к—Хӆукка, вăл пит те хăрушă-çке. Епĕ пĕрре аттене пĕтĕмпех каласа парас тетеп, ҧĕркуççи çине тăрса Еӆуша пама ыйтас тетĕп. Атте пирĕн ырă çын. Шелле те парĕ.

Х ӆ ў к к а—(Хушса) Аçу сан куç-çумне ан куртăр. Вăл хăй парăнмасĭ, ăна та парăнас пулмаст. Ĕç пит аван пыраĭ, асту пăсса ан пăрах. Еӆуш çинҧен аçуна пĕр сăмах та ан ҧĕн. Илтрĕн-и?

Н а ç т у к—Мĕншĕн тата?

Х ӆ у к к а—Йалта йĕрў-макăру тăнине пĕлместне?

Настук—Атте салтак пухмалла тенĕ-ҫҫĕ.

Хҫукка—Еҫуш, утелни хресҫен вĕт. Вĕсене пăхех тăракан кам?

Настук—Михал Васильҫĕ.

Хҫукка—Аҫупа тусла пурăнать вĕт?

Настук—Туслă, мĕн вара?

Хҫукка—Сан аҫун ăна пĕр-ик сăмах ҫеҫ каласен, Еҫуш салтак пулса тăрать те.

Настук—Ҫăнах та ҫке. Тавта пуҫ сана. Пĕтерет-тĕм Еҫуша есĕ ăнлантарман пулсан.

Хҫукка—Калатăп ҫав манран пуҫне нимĕн те ан ту тесе! Епĕ калана пек тусан ĕҫ пулĕ, ху шухăшупа тусан есĕ пĕтерĕп! Есĕ Еҫуша каймасан пуҫа касма паратăп!

Настук—Вăл илмесен?

Хҫукка—Ухмахланан-ҫке. Сан пек пикене илмесен сан пуйанлăхна хапсăнмасан, каҫҫă мар вăл, тунката. Аҫу кăшт ҫиленнĕ те каллех ҫĕнĕ. Туй хыҫҫăн пĕр-ик уйăх шăртланĕ, унтан кĕрушне киле кӳрĕ.

Настук—(Йĕрет).

Хҫукка—Тытăнҫĕ куҫне шывлантарма!

Настук—Телейсĕр епĕ. Телей курас ҫук епĕ. Хуйхă-суйхапа типсе-хăрса кайапах.

Хҫукка—Ҫитĕ, ан ĕсĕкле, ухмах. Еҫуш енисе вырт-ман-ха, ан ухмахлан: асту. (Йурласа ташлать).

Кăркна хӳрине сарса
Пĕр майах калтартатăт
Хăй амине курайса
Кувĕч-çĕрĕн саванатăт!
Ах хай ассăм мăххайăс
Ай-йуй аххайас!
Наçтук савнине курса
Кувĕн-çĕрĕн хуйхаратăт,
Хай савнине астуса (ђуп-тусан)
Кунĕн-çĕрĕн çывраймастăт.
Аххай ассăм мăххайас
Ай-йуй аххайас!

Паçтук—(Хуйхăрса тăратăт).

Хђукка—Мĕн есĕ тунката пек тăратăн! Ак еппин (пађтсасене хуçатăт).

Наçтук—Мĕн тăван, йе ухмахлантăн-и?

Хђукка—Тата йĕре пуçласан пĕр шăлне те хăвармăп, пĕтĕмпех çĕмĕрсе тухăп! (Праски кĕрет).

## 3-мĕш курăнни.

Праски—Наçтук, сана аппе ђĕнет (Наçтук туратăт).

Хђукка—Есĕ мĕн тăван? Пĕр май çывăран пулĕ?

Праски—Мĕн тăвас манăн. Ĕçеп-çиметĕп те выртса çывратăп. Пĕр чĕлĕк те курмастăп. Хут пĕрре тĕлĕкре кађăă курас ђĕ!

Х ђ у к к а—Есĕ ахаљ вырти-ђђен мĕн те пулин вула.

П р а с к и—Мĕн вулас тură кĕнеки-и? Ĕнтĕ вула вула кăмăл пăтранаť. Кађђăсем çинђен пулсан-ђђĕ.

Х ђ у к к а—Епĕ сана пĕр кĕнеке тупса парăп, ытарайман. Л. Мак-ђа ђĕнсе кил-ка. Наçтук ђĕнђĕ те.

П р а с к и—Йурĕ, есĕ кĕнекине пама ан ман.

Х ђ у к к а—Манмăп-çке (Праски тухаť). Пурте ăнтан кайĕç! Тăватăп та ĕç! (ташласа) Ей Хђукка, савăн вăтăлиђђен, ватăлсан сан çине суккăр йăтă та çăврăнса-пăхмĕ! (Алăка шакађђĕ) пĕр! (Пот. Мак кĕрет).

## 4-мĕш курăнни.

П о т. М а к—Наçтук мĕншĕн мана ђĕнтерђĕ?

Х ђ у к к а—Епĕ, ан çилен Пот-Мак-ђă.

П о т. М а к—Мĕн ĕçпе?

Х ђ у к к а—(Йĕрмĕшленсе). Пот. Мак-ђă инкек пулђĕ.

П о т. М а к—Çавăнпа ташлас пулаť-и? Ну мĕн инкек?

Х ђ у к к а—Ман хĕç пăсăлђĕ, кайнă ђух хурса хăвартăм, вăл ÿксе çĕмĕрĕлнĕ. Мĕн тăвас. Манехве анне пĕлсен пĕтерет ĕнтĕ. Сан тарçусем пĕлеççĕ пулĕ тÿрлетме, йарха тархашийăнах.

П о т. М а к—Пĕлекенни çук.

Х ђ у к к а—Пур, епĕ пĕлтĕм ĕнтĕ.

Пот. Мак—Кам?

Хђукка—Еђ ш йатли.

Пот. Мак—Кам сана ђарат, лес те пар.

Хђукка—Кăларма йурамаст, пурçăп арканса пĕтет.

Пот. Мак Апла мĕн тăвас-ха?

Хђукка—Тархасшĕн йар есĕ ăна кунта.

Пот. Мак Йарас пулĕ. Манехве вăрçса пĕтерĕ тата. Ђĕр-куççи çине лартса пĕр 500 хут тайăлма хушин ăптан капăн. Йарăп. (Тухса кайат).

Хђукка—(Сикре) Пулђĕ те ĕç! Ну Настук, сăрнайна тăсма ђарăнăн ĕнтĕ. (Настук кĕрет.)

## 5-мĕш курăнни.

Хђукка—Сан ђĕрӳ халĕ-те ыратат—и?

Настук—Ђăтма çук.

Хђукка—Кăшт ђăт, емеллĕпĕр. (Тухат).

Настук—Мĕн кăна пулĕ-ши? Ку инкеке ђăтма вăй çитес çук. Вутра çунна пек çуна ăп. пĕрре кăна курасђĕ, курласђĕ... пур çĕрге те ха ăх. Курсан мĕн калăн. Намăсланнине çĕр тĕпне анса кайăн (пуçне алли çине хурса усса ларат, Еђуш килсе кĕрет.)

## 6 мĕш курăнни.

Настук—Еђуш кĕнине сисе ура çине тăрат те пĕр ђĕнмесĕр пăхат) Мĕн сана кирлĕ?

Е ђ у ш—Мана Пот. Мак-ђă йађĕ.

Н а ç т у к—Ман патăма-и? Мĕн˙ тума?

Е ђ у ш—Хĕç тӳрлетме.

Н а ç т у к—Апла пулсан тӳрлет.

Е ђ у ш—(Хĕç патне пырат̆, Наçтук ђĕрçитийне тӳрлеткелет).

## 7-мĕш курăнни.

Х ђ у к к а—(Ђупса кĕрсе). Иксĕр те есир ухмах. Пĕр пĕрин çине пăхса тăма епĕ сире тĕл турăм-и? Итле, йĕкĕт, хĕр сана йуратат̆, калама хăйаймаст̆. Ех, турђăкасем. (Наçтука Еђуш патнелле тĕртет, хăй тухса кайат̆).

Е ђ у ш—Ун сăмахĕ ђăн-и?

Н а ç т у к—Ђĕрçитийне питне хупăрлат̆).

Е ђ у ш—Хăраса Наçтук патнелле пырса аллинђен тытат̆).

Н а ç т у к—(Ђĕрçитийне йарса, савăнса Еђуш ытамне ӳкет).

*Ђаршав.*

# ТĂВАТТĂМĔШ ПАЙĔ.

## Х у р а п ӳ р т.

## 1-мĕш курăнни (Пăнтели)

П ă н т е л е й—(Ђӳређе умĕнђе кĕнеке вуласа ларат̆). Ех телейсĕр, ырра пĕлмен ђун! Тамăкалла шунă çĕртен

кăшт ҫарăн. Ҫылăх мишукне пĕр самантра хулă ҫинҫен илсе пăрах. (Кĕрет Микихвер).

## 2-мĕш курăнни.

Пăнтелей—(Пӳрниве вуласа ҫитнĕ тĕле тытса). Кам унта? Мĕн кирлĕ сана Микихвер?

Микихвер—(Аллисене йăваласа). Ăшăнма тесе кĕгĕм. Улпут пек пуйан йăмăк патĕнҫе пурăнас, йăтă пек шăнса вилессе ҫитнĕ!

Пăнтелей—Ăшăнсамах, анҫах Еҫуш кĕрсен...

Микихвер—Мĕне кирлĕ мана сан Еҫушу. Пот. Мак-ҫа ăна прикашҫик тунипе патша пулайман пулĕ-ха. Урайне шаклаттарса пуҫ-ҫапас марши тата.

Пăнтелей—Пот. Мак-ҫă ăна астума хăварнă.

Микихвер——Санран пуҫне те пĕлетĕп-ҫке Хуҫа ĕҫпе кайнă, вăл вăхăтра мана кăшт ирĕке кăларсан та пырĕ-ҫҫĕ. Епĕ вăрлама-тума кĕмен, кăшт ăшăнма тесе кĕтĕм.

Пăнтелей—Ăшăн, Микихвер, ăшăн. Ҫăн-и вара есĕ йăмăкун мелнелникĕкунĕ Пот. Мак-ҫă патĕнҫе хăнара пулни?

Микихвер—Ҫăн, Пăнтелей ниҫҫе. Пот. Мак-ҫă халатне тăхăнтарҫĕҫ, хăйсемпе сĕтел хушшине лартрĕҫ. Пит те пуйанскерсемпе пĕрле лартăм.

Пăнтелей—Каҫҫă килнĕ теҫҫĕ, ҫăп-и?

Микихвер—Аштӗпех килнӗ-ҫҫӗ, Снешкох хушамаҫӗ. Пит те пуйан тет.

Пӑнтелей—Каҫҫи кӑмӑла кайнӑ-и?

Микихвер—Питех мар, Пӑнтелей пиҫҫе. Хӗрӗ пӑхмарӗ те, куҫне те ун ҫинелле йамарӗ.

Пӑнтелей—Ҫӑна-и?

Микихвер—Ҫӑн пулмасӑр. Шӑлт тункатах. Тумлавма йака тумланнӑ. Тумтирӗ ҫат ҫыпӑҫҫа ларат. Тӗрлӗ кирлӗ мар ҫинҫен калаҫса хӑлхава шӑлт ҫӗртрӗ.

Пӑнтелей—Мӗн тен?

Микихвер—Каҫҫӑ аштӗ унти йӗркесем ҫинҫен каласа ӑнтан йаҫӗ, унти йӑласене каланипе хӑсас киле пуҫларӗ. Унта тӗрлӗ тиатӑрсене, палсен ҫинҫен, хӗр-арӑмсене ҫапта-ҫарамас тенӗ пекех кӑлараҫҫӗ тет.

Пӑнтелей—Ан лапӑртат кирлӗ-мара, намӑссӑр.

Микихвер—Ҫӑн калатӑп. Мӗн хака илнӗ, ҫав хакпах паратӑп.

Пӑнтелей—Ах турӑ, темӗн кӑна илтсе вилӗн ҫав. Пирӗн хуҫасем мӗн вара? Хапӑл турӗҫ-и?

Микихвер—Пот. Мак-ҫӑ итлесе ларат кӑшт май ҫаптарат. Куҫӗсене вара тытса ҫурас пек пӑхат. Йӑмӑк вара нимӗн тума та пӗлмест. Хӑлхипе итлет, вӑрттӑн сурса ларат. Кӑмӑла кайӗ-и вара ҫавӑн хыҫҫӑн? Кам хӑй хӗрне ҫапла намӑс курма парӗ?

П ă н т е л е й—Шуйттан пуç çавăрни. Апла ĕç пулмаст иккен.

М и к и х в е р Паллах ĕнтĕ... Йепле хатĕрленҫĕç вара хăйсем. Пĕçере пĕçере шăлт супрĕç, аслă хăнисем çинҫен каяçса ҫĕлхисене ывăнтарҫĕç. Кĕтмэ аван çынна кĕтрĕç, ун вырăнне пушă хăмпă пулҫĕ. Пуйанлăхĕ пулсан та мĕне кирлĕ-ха вăл? Ҫăн... Çав пуйансем авланни-тупи çинҫен шухăшласа илсен, кулăш, çара кулăш. Çын мар, каштан çинҫи ҫăхçем те ахăлтатса кулаççĕ пулĕ. Суйлаççĕ вара хăйсем валли, суйла, суйла супаççĕ Пасарта атă илнĕ ҫухнехи пекех.

П ă н т е л е й—Мĕн кирлĕ тата сана, авалхи йăла?

М и к и х в е р—Йăлипе йăла та ĕнтĕ...

П ă н т е л е й—Ху мĕнле авланнă тата?

М и к и х в е р—Пĕлесшĕн пулсан итле. Мана хай йурăри пек:

Мана авлантарнă ҫух
Ем армана кайнăҫҫĕ,
Манăн туйа тунă ҫух
Епĕ вăрман касвă-ҫҫĕ.

Тени пек авлантарҫĕç.

П ă н т е л е й— Мĕнле апла?

М и к и х в е р—Епĕ авланнă ҫух ура çине тăраймин ўсĕр пулнă.

Пантелей—Апла иккен! Ăçта вара сан арăму? Вилнĕ-и?

Микихвер—Мĕн вилме? Вилмен халĕ те сывă. Хупахçă патне тарса кайрĕ Йĕрсе пурăнат (Тапăртатат). Урасем кăшт ăшăнаççĕ. Тавта пуç турра.

Пантелей—Тӗнӡере ăптан каймалла ĕçсем пулаççĕ. Кашни хăй кăмăлĕпе пурăн т. Есĕ Микихвер Пот. Макӡă мĕн ĕçпе кайнине пĕлместне?

Микихвер—Нимĕн калама та пĕлместĕн. Вăл ĕç çинӡен калаçнă ӡух кăшт хăлхасене çивӡĕрех тытас пулат. Ăна-кăна ман пĕлмесен те пырат.

Пантелей—Калаçассу килмест пулсан, ан калаç. Ман сана итлеме вăхăт та çук. Кайса тарçăсем ĕçленине пăхам-ха. (Çăлĕкне илет). Есĕ кунӡа ытла вумай ан лар. Еӡуш килсен..

Микихвер—Кайăп. Алăсене кăшт ăшăтам. (Пантелей кайат) Каллех пăтă пек арпалăха кĕрсе лар. Çил тивмест, ларан çар. Кĕшт çуттине тупасӡĕ. тутанса кăна пăхасӡĕ. Ех пурĕнĕç. Кĕсйере пĕ пус çук. Ăçта унта ерех тупма? Пăтă та манран аваптарах пурăнат. (Еӡуш пырса кĕрет).

## 3-мĕш курăнни.

Еӡуш—(Çиленсе). Мĕн тăван есĕ кунта?

Микихвер—Кăшт ăшăнма кĕтĕм.

Еђуш—Кай ху арпалăхна. Саншăн мана çакă тата Пот. Мак-ђă мĕн тума хушнине астăватăн-и?

Микихвер—Ан калаç, саврап пуçне те пĕлетĕп. Ех йатă пурăваçĕ! (тухат).

Еђуш—Пурăнаç, пурăнаç! Çав пурăнаçра капнин хăйĕн инкек-синкекĕ, хуйхă-суйхи, хĕн-хурĕ пур. Наçтука акă епĕ йуратататăп, апђах пушă кĕйсепе йепле ун патне пырса çыпăçăн-ха? Пот. Мак-ђа авлантарма мар, хуса кăларĕ. Кăларса илес-и, Хђукки калană пек? Хăрушă. Потап Макçимђă йăвăр, тўсеймĕн. Ылттăн, ылттăн мана кирлĕ халĕ! Стукалов Ветлука вăрманĕнђе ылттăн пур тет. Хуçа ахалех каймарĕ вăл. Манăн унта вĕçтерес-ђђĕ. Вара урăхла калаçăттăм. Ылттăн, ылттăн... Çав ылттăн Наçтукран ытларах ман пуçа çĕмĕрет. Çиленет пулĕ ман çине Наçтукăм. (Пăнтелей кĕрет).

## 4-мĕш курăнни.

Пăнтелей—Мĕн пулнă сана? Кунта кĕни ултă уйăх, прикасђик пулса тăтăн. Есĕ пурĕ пĕрех хуйхăран. Те ђирлерĕн тата?

Еђуш—Ђирлемен епĕ. Темĕскер ђĕре вырăнта мар.

Пăнтелей—Шухăш?

Еђуш—Ман шухăш пĕтес çук. Мĕн пур пирĕн? Çемйе пысăк, вай çук, мĕн пурне çаратнă. Шухăш

мĕнле пулас мар! Нимĕн тăваймăн, ҫуну ҫунĕ унта. Шухăш ҫынна вăйлăлатмасť, хуйха илемлелетмест.

Пăнтелей—Сана Пот. Мак-ҫă пăрахмĕ. Есĕ ун кăмăлне кайнине курмастăн-и? Епĕ 20 ҫул ĕҫлетĕп, ăнтан кайатăп. курманнине куратăн: ултă уйăх хушшинҫе сана прикасҫик турĕ.

Елҙуш—Ҫаплине ҫапла та... малашнехи курăнмасť. Пот. Мак-ҫă вилсе кайма пултарať. Тата вăл хайар, ҫăхăмлă ҫын.

Пăнтелей—Вăл пур. Хăш ҫух нимĕнсĕрех тусан тустара пуҫлať, ҫăт кăна. Анҫах кăмăллă.

Елҙуш—Мĕн те пулин кăмăлне каймасан... епĕ тарҫă. Вăйли ҫиленни ман пеккине вилĕмрен йăвăр.

Пăнтелей—Ан касаҫ Елҙуш. Турă хушни пек пурăнас тесен пуйан ҫиллкнҫен мар, ҫухăн куҫ-ҫулĕнҫен хăрас пулať.

Елҙуш—Ăна епĕ аҫараппах илтнĕ, анҫах Пот Мак-ҫран хăратăп. Мĕн те пулин пулсан, мĕн тăвăн Епĕ сана, Пăнтелей пиҫҫе, аттене йуратнă пекех йурататăп. Епĕ сана пĕр йапала каласшăн, анҫах ун ҫинҫен никам та ан пĕлтĕр.

Пăнтелей?—Пĕр хăрамасăрах кала (Елҙуш каллачалла уткаласа ҫӳрет). Кала, хăвăн ҫунпа пусар.

Елҙуш—Кирлĕ мар тăвасси манăн ҫук, тĕрлĕ шухăш, хăрасси ҫителĕклĕ. Епĕ сана калассине атте те пĕл-

мест, пупа та ҫылӑх каҫарттарнӑ ҫух каламан. Сана калас тетӗп. Вӗрент есӗ мана мӗн тума. Тӗнҫене есӗ ху ӗмӗрӗн тӑрӑшшӗнҫе куркаланӑ, илтессине те нумай илтнӗ. Емелле ман ҫирлӗ ҫунӑма. (аллисемпе хул-пуҫҫирен тытса, пуҫне Пӑнтелей кӑкри ҫине тайат).

Пӑнтелей—Кала, ҍӗкӗт; ах турӑ, сан пуҫу вӗри, вутпа ҫунат тейӗн.

Еҍуш—Епӗ атте-аннен савнӑ аҫи. Пурӑнӑҫа вӗсем мана верентрӗҫ. Пӗр йут ҫын панҫа тарҫӑр пурӑнасса, йут ҫын пӳҫҫӗ ҫӑкӑрне-таварне епӗ ҫийессе вӗсен ҫӗри сисмен. Турӑ ирӗкӗ пулмалла-ҫынна тайӑлас пулҫӗ. Атте киленҫен ҫынна кайнӑ ҫух, ман ҫӗри йепле сикнине ху пӗлетӗн пулӗ. Анне макӑрса йӗнине епӗ ӗмӗр манас ҫук. Ех-ех-ех!

Пӑнтелей — Ан хуйхӑр. Турӑ ҫырнисенҫен иртес ҫук.

Еҍуш—Епӗ ӑна хирӗҫ мар. Килтен тухса кунта йепле ҫитнине епӗ пӗлместӗп. Кӑнтӑрла-и, ҫӗрле-и, ӑна та астӑваймасп. Пӗр хуҫа ҫизҫен шухӑшлаӑ.

Пӑнтелей—Хайаррӑн туйӑнҫӗ-и мӗн?

Еҍуш—Пахма хайар, каласни туни-шалт атте. Анҫах мана хӑлхарӑн такшин, те пирӗшти те усал; „Ҫак ҫын сан вилӗмӳ“ терӗ. Вӑл ырӑ: анҫах епӗ унтан хӑратӑп, ҫӗре йалан хӑраса сикет! Кам ҫавна систерет-ши?

Пăнтелей—Шуйтан, кам пултăр, унтан пуçне никам çук. Есĕ, Еђуш, ăна ан итле. Вăл сана пĕтересшĕн. Кĕлĕпе хăнтан инçетрех хăвала.

Еђуш—Тавта пуç сана. Пайанах кĕл-тăва пуçлăп Пот. Мак-ђран хăрама пăрахăп.

Пăнтелей—Еђуш, мĕн те пулин кирлĕ маррине сăн ђĕрӳ сисмест-и? Пĕр кун кунта хăна пулнă Стукалов ырă тăвас çуккăн туйăнаť. Пот. Мак-ђă ăçта кайрĕ унпа?

Еђуш—Хĕрлĕ урам арманне теççĕ.

Пăнтелей—Улталатăн, улталани куçăнтан паллă. Есĕ пĕр-кун хута унпа вăрттăн калаçкаларăн. Пот. Макçăмђă та çынтан вăрттăн калаçатђĕ. Есĕ вăл ĕçе пĕлетĕнех. Кала, усал тăвасшăн мар, ырă тăвасшăн ыйтатăп.

Еђуш—Суту-илӳ çинђен калаçатђĕç.

Пантелей—Есĕ йĕкĕт, пăрса ан йар. Суту-илӳ. Суту-илӳ тĕрлĕ вăл. Хăшĕншĕн тав таваççĕ, хăшĕншĕн тĕрмене лартаççĕ. Стукалов çинђен ыррине сахал калаççĕ. Ăпа ахалех тĕрмене лартман пуђ. Пот. Мак-ђа ан çыхтăрђĕ.

Еђуш—Пурте айăппа тĕрмере лармаççĕ, ăна пăăплайман-çке.

Пăнтели—Çаплине çапла та, ун çинђен усал тав çӳрет.

Еђуш—Мĕнле тав?

Пăнтелей—Ылттăнпа кĕмĕл ҫинђен.

Еђуш—(Хăраса кайса) Ылттăн? Ăҫти ылттăн?

Пăнтелей—Ветлука вăрманĕнђи.

Еђуш—Вĕсем унта кайрĕҫ.

Пăнтелей—Паҫăр армана терĕн. Унта кайнине хамта пĕлетĕп, ылттăншăн-и?

Елуш—Пăнтелей пиђђе, ан-ҫых мана

Пăнтелей—Ҫыхма мар, хуҫана та ҫăасшăн, вăл инкек-синкксеке лекнет. Кала мана тӳррипе, ҫăлма пултарăпăр вет.

Еђуш—Ҫав ĕҫпе.

Пăнтелей—Ах турă!

Еђуш—Мĕн вара, пĕрте ăнланаймастăп. Мĕнле инкек.

Пăнтелей—Ҫав мура шуйттан йађĕ пулĕ ҫав!..

Еђуш—Тупăшлă ĕҫ тет.

Пăнтелей—Тупăшлă. Ҫав тупăшлă ĕҫшĕн ĕлĕк ђухнĕ пыра тăхлан шăратса тултаратђĕҫ. Халĕ апла пулсан та мухтасси ҫук.

Еђуш—Мĕнле ĕҫ вара?

Пăнтелей—Паллă ĕнтĕ. Ахалех ăна тĕрмене партмарĕҫ, Ҫĕпĕртен ҫăлăнса йулђĕ те каллех ĕлĕкхине пуҫларĕ. Каллех укҫа тăвать.

Еҫуш—Ах турă! Вĕсем ылттăн тăпри шырама тесе кайрĕç. Епĕ хам та кайасшăн çунаттăм. Стукалов тăприне те кăтартрĕ.

Пăнтелей—Есĕ çамрăк-ха, сынна, ҫухлаймастăн. Епĕ йна курсанах ҫĕре сисрĕ. Антан кайагăн, йеиле вара вăл Пот, Мак-ҫа улталайнă-ши. Еҫуш, пăрах çав шухăша, шеллесе ӳкĕтлетĕп.

Еҫуш—(Пуçне усса тăрать)

Пăнтелей—Каллех кайса çаварăнам-ха. (тухать).

Елуш—(Шухăша кайса ӳгкаласа çӳрет. Çӳлтен виçĕ хутҫен кĕрсчетгерни илтĕнет). Акă Нaçтук килет. Вăл мана ылттăн ҫухлех шухăшлаттарать. (Нaçтук кĕрет).

## 5-мĕш курăнни.

Наçтук—(Пĕр ҫĕнмесĕр пырса Еҫуша мăйĕнҫен ыталаса, йĕрсе хăй пуçне унăн хул-пуççи çине хурать). Савнă ҫунăм, сана курмасăр епĕ шăлт хуйха кайрăм.

Еҫуш — (Ҫĕнмесĕр Наçтука аҫашлать, анҫах питех мар).

Наçтук — Еҫуш йе есĕ епĕ килнипе хĕпĕртеместĕн?

Еҫуш—Мĕн калаçан, йепле ман есĕ килнипе савĭнас мар, йепле хĕпĕртес мар. (Сиввĕнрех калать). Ех Настаçийа Потаповна!

Н а ç т у к—Йепле епĕ сана Настаçийа Потаповна, йăçтап?

Е ђ у ш—Ан çилен, астăваймасăр каларăм.

Н а ç т у к—Пăрахрăн-и?

Е ђ у ш—Мĕн калаçан, Наçтук, ан калаç. (Аллинђен тытаť, анђах вăл туртса илет).

Н а ç т у к—Калаç... Виттĕр куратăп. Улталаймăн, ђĕре сисет вĕт есĕ...

Е ђ у ш—(Сăмах памасăр) Итлехха...

Н а ç т у к—Сан мана итлес пулаť, манăн мар. Куратăп сана виттĕрех. Мĕн ултала н? Мĕшĕн есĕ мана пăрахрăн? Пĕр йат йараошăн çеç култăн-и? Кала...

Е ђ у ш—Ăçтан есĕ ăна туртса кăлартăн? Ăçтан?

Н а ç т у к—(Урине тапса). Ђарăп! Путсĕрскер! Йĕрĕп, тесе шухăшлатăн-и? Çук, ан кĕт. Урăхла йышши!.. Анђах, ман вырăна урăххине тупсан... вăл пурăнаймĕ. Хăна та аванах пулаймĕ... Ан-ман ман сăмаха! (Тухаť).

Е ђ у ш—Çав шуйттанлавнă ылттăн ман пуçа çавăрђĕ, Наçтука манийђенех ухмахлатрĕ. Ылттăн тупас çук. Çак мула та çухатăн. Хамăн телей çапла пулĕ çав!

*Ђаршав.*

## ПИЛЛӖКӖМӖШ ПАЙӖ

Пирвайхи пайри пӳлӗмех. Пуҫламӗшӗнҷе шӑнкӑрав сасси илтӗнет.

### 1-мӗш курӑнни.

Укҫинепе Настук.

Настук—(Ҷӳреҷе виттӗр пӑхса). Ах, анне, Пӑнтелей ниҷҷе Комаравкӑран тавӑрӑнҷӗ пулмалла.

Укҫине—Ҷӑнах-и? Мӗн кӑна килӗ-ши? Манехве та ҷӗрӗ ӗнтӗ, те вилӗ!

### 2-мӗш курӑнни.

Вӗсемпе Пӑнтелей.

Настук—(Кӗрекен Пӑнтелейе) Мӗн куртӑн?

Укҫине—Сывӑ-и-ха?

Пантелей—Ҷӗррине ҷӗрӗ те, пит наҷарланнӑ. Вутра ҫунпӑ пек ҫунат. Кунрав куч наҷарланат. Пурте ҷӗрӗлӗшни ҫук-ши тесе хӑраса, йӗрсе тӑраҫҫӗ. Лекӗр илме те йаҷӗ Марйе.

Укҫине—(аллисене шарт ҫапса) Ах турӑ! Турӑран та хӑрамаҫҫӗ-ши? Хӑй вилӗмӗпе вилме те памаҫҫӗ, вилӗме пулӑшакана ҷӗнме йанӑ. Ҫылӑхӗ мӗн пысӑкӗш, ҫылӑхӗ. Йе унта ҫара тӑм пуҫ-и? Мӗн вара ҫав Марйе пуҫ

пулнă. Таса ҫуна вилес уммĕн варлатаҫҫĕ. Ех путсĕрсем, шуйттан мĕлкисем! Тăшмансем! Мĕнле те пулин нимĕҫе кўрсе ҫын ҫупне варлаҫҫĕ. Ах тур, тур, тур! (Пăнтели тухат).

Н а ҫ т у к—(Куҫ-ҫулĕсене шăлса) Анне, йар мана аппа патне. Пăхса йуласҫĕ. (Амăшне ыталаса йĕрет).

У к ҫ и н е—Ан калаҫ, ҫунăм, ан ухмахлан, хĕрĕм. Шухăшлаха-епĕ сана йепле йарам-ха? Аҫу килсенмĕн тес! Ăна есĕ пĕлместнем?

Н а ҫ т у к—Анне епĕ таҫта ҫунма кайасшăн мар вĕт. Атте вăрҫма мар мухтĕ-ха.

У к ҫ и н е—Есĕ аҫуна пĕлместĕн. Епĕ унпа 30 ҫул пурăнатăп, ун йăлине виттĕр пĕлетĕп. Есĕ пĕркун монастире кайас терĕн... Аҫу килсен мана ҫĕррĕн ҫийĕ. Ан шухăшла та.

Н а ҫ т у к—Нимĕнех те пулас ҫук, анне.

У к ҫ и н е—Манехве мана та йут мар. Епĕте вĕҫҫе кайăттăм.

Н а ҫ т у к—Ҫăпах та нимĕн пулмĕ.

У к ҫ и н е—Епĕ сана йамастăп терĕм. Асту-ха ирĕке тухнă, ҫарма та ҫук. Сана кăшт алла илес пулат. Ан кай тетĕп!

Н а ҫ т у к—(Ҫиленсе). Пурăнăҫ та ҫке пирĕн. Кăшт пурăнсан мана та куккана арпалăхпа усранă пек, арпалăха хупĕҫ. Ех йĕтă пурнăҫĕ! (Ҫуреҫе патне кайат).

Уксине—Асту-ха. Ашшĕ-амăшĕнҫен те хăрамасть. Йарха сана, аҫу ман пуҫа татса йатта пăрахĕ. Хам та кайăттăм, киле мĕнле пăрахăн. Пĕтĕм ҫĕрене тапратрĕ, кайса выртам-ха (тухать).

Настук—(пĕҫҫен тўреҫерен пăхса) Пурăнăҫ пулҫĕ-и вара ку? Пĕр сăмах калама та ҫук, ҫунна кампа йăплавтарма та ҫук Йăмăк кунĕн-ҫĕрĕн ыйхăпа, анне сыврман ҫух ахлатса пуҫа ыраттарать. Лар, тыткăнта ларнă пек. Шуйттан Еҫуш куҫа курăнмасть. Пăрахрĕ те хуйхи те кĕтнĕ урăххипе аван тет пулĕ, хĕрпе выҫа выҫа та, кирлĕ мар ҫупĕ пек кăларса пăрах тет пулĕ. Ҫук Есĕ мана пĕлместĕн, кăтартăп-ха епĕ сана. Салтак тумтир тăхăнтарăп, аттене пĕр сăмах ҫеҫ каласси. Йĕркине пĕлесҫĕ кăна, кăкăрне ҫĕҫĕ кўртсе лартăп, Ҫĕпĕртен те хăрамăп! (Уткаласа ҫўрет).

## 3-мĕш курăнни.

### Настукпа Еҫуш (кĕрессĕ).

Настук—(Ҫилĕпе) Мĕн кирлĕ сана?

Еҫуш—Уксине Сахарăвнана курмалла-ҫҫĕ.

Настук—Ҫыврать вăл. Вăхăтне пĕл. (кайалла ҫаврăнать)

Еҫуш—Ĕҫĕ пысăк, каласах пулать.

Н а ç т у к—Çывăрат тесе каланă сана, тата мĕн кирлĕ, тух та кай! (Ђарăнса).

Е ђ у ш—Çывăхарат)

Н а ç т у к—(Çаварăнса) Кай çаврăнса!

Е ђ у ш—(Аллине тытса, йĕрет) Настук, ылттăн, мĕн çиленен? Кăшт шелле мана. Çакăнса вилессе çитрĕм ĕнтĕ.

Н а ç т у к—(Хуллен) Хуллентерех, анне илтĕ.

Е ђ у ш—(Ђуптуса) Настук, мĕнле тăшману çинђен мĕнле йĕрĕшке çинђен каласан есĕ?

Н а ç т у к—Хулĕ çине пуçне хурса) Ан асăн, ан асăп.

Е ђ у ш—Ăçтан есĕ ăна туртса кăларнă? Епĕ шухăшламан та.

Н а ç т у к—Ђăрăн тархашшĭнах, ухмахлантăм çавă. Есĕ салху, çав шухăш пуçа килсе кĕђĕ.

Е ђ у ш—Ăçтан ман савăпăç тупас-ха? Ман шухăш пулмасан камăн пулмалла.

Н а ç т у к—Апла епĕ сана йуратни савăнтармаст-и?

Е л у ш—Вăл мар, урăх телей ăçтан тупăн. Анђах пуçа малашнехи кун килсе кĕрет те, шăлт ђĕрене çурат. Епир пĕр-пĕрне йуратни телейе мар-тăр, хуйха-суйха пулмалла. Çавăнпа епĕ салху çӳретĕп те.

Н а ç т у к - Малашне. Малашне епир арлă-арăмлă пулăпăр.

Е ђ у ш—Вăл калама çеç çăмăл, тăвасси хĕн!

Н а ç т у к—Ыгтисем пек епир те тăвăпăр.

Е ђ у ш —Аусем?

Н а ç т у к—Минђет хыççăн килсе пуç-çапăпăр та иртсе те кайĕ. Ĕлĕкхи йăлапа кăларса илĕн. Атте хăй те аннене çапла илнĕ.

Е ђ у ш—Ваттисем хăйсенне астумаççĕ, çамрăксене вĕрентнĕ пек тăваççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçĕссне манаççĕ.

Н а ç т у к—Аĕсене илĕç

Е ђ у ш—Вăл кăра çын, ивкек тупасси инçех мар.

Н а ç т у к—Мĕнле иккен?

Е ђ у ш—Сахал-и? Вилĕм те кĕтсе тăр. Пат. Мак-ђă ытла ман кăмăллă çын, пит те ђас çиленет. Тарçи хĕрне илçен, пуçа татса пăрахма та ђарăнмĕ.

Н а ç т у к—Кирлĕ мар ан калас. Минђет вăрттăн тăвăпăр та, пĕтрĕ ĕç. Калаçасси пĕтнĕ Тухса кайăт тенĕ пулсан, тухса пыратăп пулăт. Акă сана манран çĕрĕпе линта.

Ељуш—(Çĕрĕпе линта илет те Наçтука ђуптăвăт, пуçне ђиксе тăрат) Хђукка калаçнипе ĕç пулса пĕтес çук вăл.

Н а ç т у к—(Çĕрĕпе линтана туртса илсе) Апла пулсан кай ман пуç умĕнђ н, есĕ мана йуратмастăн!

Е ђ у ш—(аллинђен тытса) Мĕн калаан, есĕ сăмахупа мана кĕлертĕп. Сан пирки епĕ шыва сикĕп, вута кĕрĕп.

Н а ç т у к—(Кулса) Шыва сикмĕн-пит тарăн путма хăрăн, вута кĕмĕн-пиçес килмĕ. Халăнтан килес çук.

Е ђ у ш—Есĕ кулиђђен, мана шеллесђĕ. Епĕ мĕншĕн сан аçунтан хăранине пĕлсен...

Н а ç т у к—Пĕлетĕп, пĕлетĕп. Мĕн хăрамалла.

Е ђ у ш—Йĕспле атте-анне пилĕхĕсĕр минђете кĕрессха. Хăтана йар-ха, кăтартĕ сана хăта. Кĕсйере пулсан, ылттăн кĕмĕлĕм пулсан, ђарăнса тăмăттăм.

Н а ç т у к—Ăçтан илттăн тупăн-ха? Аслă çул çине кистенпе кайса тăрасшăн-им?

Е ђ у ш—Апла пĕрре шухăшлавă пулсан мана çак вырăнтах çĕр çăттăр, çутă хĕвеле ан курам. Манăн та атте-анне пур, епĕ те вĕсен йатне йурăтатăп. Епĕ сана Наçтук пĕр йапала каласшăн-ђђĕ. Ыттисене каламан-и?

Н а ç т у к—Сĕлеке çăвар мар епĕ.

Е ђ у ш—Епĕ инçе мар пĕр çĕрте ылттăн пуррине пĕлтĕм.

Н а ç т у к—Мĕн вара?

Е ђ у ш—Ђавса кăларас тетĕп, ђи пуйан пулăп!

Н а ç т у к—Мĕн вара „клат"-и?

Е ђ у ш—Мар, ылттăп тăпри. Мана кăтартрĕç те. Аçу та çавăнтах кайрĕ. Кăларăн та, йевђе йарăп.

Н а ç т у к—Апла пулсан есĕ пуйавланасшăн-и?

Е л у ш—Çапла çавă.

Н а ç т у к—Мĕншĕн паттăр пуласшăн мар?

Е ђ у ш—Мĕн валли? Паттăрсем халапра çеç пулăл.

Н а ç т у к—Апла пулсан, епĕ сана пĕр халап йарса кăтартам. Аҕасем ут çигеҫнĕ çĕрте пĕр кĕтӳ çуренĕ. Сасартăк кашкăр пĕр путеке çавăрса илнĕ те вăрманалла вĕҫтере пуçланă. Пурте кашкăр хыççăн ҕупнă, анҕах лешĕ путекне пăрахмасăр вăрмана кĕрсе çухалнă. Ман халап аван-и? Кăмăлна кайат-и? Елекçей Трихвăнҕă? (Микихвер кĕрет).

## 4-мĕш курăнни.

М и к и х в е р—Сăмахлани ĕçе йурăхлă пултăр. (Наçтук тухат). Есĕ, йекĕт, хĕрсен тутине пĕлен иккен. Асгу-ха йăçталла сулат. Маттур!

Е ђ у ш—Ҕарăн, путсĕрскер! Пĕр сăмах тата каласан çăварна çапса çĕмĕрĕп. (Укçине кĕрет).

## 5-мĕш курăнни.

У к ç и н е—Мĕн есир шавлатăр? (тетĕшне курса) Ку мĕн тата (Еђуша) хăвалаcа кăлар, куçăм ан куртăр. Ах шуйттан, пĕтĕм ĕмĕре çирĕ. Хăвала ăна!

М и к и х в е р—Кайăп, савнă йăмăкăм, есĕ хăваламасан та алăк тĕлне тупăп. Анҕах çапла хăтланнăшăн сана çылăх пулĕ.

У к ç и н е—Кай ман куç умĕнҕен!

Микихвер—Ех йăмăкăм, тетӳ куç-çулĕсем сан пуçна пулĕç.

Укçине—Сана мĕн кирлĕ?

Еђуш—(йăвашăн) Ман пĕр ĕçпе Макăровка каймалла, ыйтас терĕм.

Укçине—Мĕн ыйтма, кайах.

Еђуш—Каламасар кайма йурамасť.

Укçине—Кай еппин.

Еђуш—(Тайăлаť те тухаť).

Укçине Апкьинђи алăкне уçса) Наçтук, кил-ха кунта! (Наçтук кĕрет.)

## 6-мĕш курăнни.

(Укçинепе Наçтук).

Наçтук—Мĕн тата?

Укçине—Есĕ кунта кăшт йĕрке .кӳр.. Аçу килĕ, епĕ ăна тĕлĕкре, ак сана курнă пекех, куртăм. Шет Комаровка та каймалла пулĕ-ха. (тухса каяť)

Наçтук—(пĕђђен). Атте ђасрах килсен йурĕ-ђђĕ. Аппа патне вĕçтереп, хуйха-суйха Хђукка сирсе йарĕђђĕ. (Укçине кĕрет).

Укçине—Есĕ хĕрĕм нимĕн те туман курăнаť.

Наçтук—Темĕн пуç ыратаť, нимĕн тăвас килмест.

Укçине—Мĕн пулђĕ-ши вара, сĕрĕм тивмерĕ-ши?

Н а ç т у к—Ăстан сĕрĕм пулгăр-ха.

У к ç и н е—Мĕн пулӡĕ-ши вара апла? (Шăнкăрав сасси илтĕнет).

Н а ç т у к—(Ӡӳреӡе витĕр пăхса). Анне, атте килет, атте килет!

У к ç и н е—Ах тур, тур, тур. (Айккинӡе алăка уçса) сăмавар лартăр-ха есир унта. Праски аçу килет, тар ӡасрах, кил кунта.

## 7-мĕш курăчни.

(Наçтукпа Укçине-Параскипе Пот. Мак-ӡă иккĕш икĕ алăкран кĕреççĕ).

П о т  М а к. — Сывă-и? Мĕнле вăхăт ирттертĕр? (Тенкĕл çине ларать, хĕрĕсем аттисене хываççĕ).

У к ç и н е—Пĕр майĕне сана кĕтсе шăлт ывăнтăмăр! Тăçта çухалнă тесе ăнтан кайрăмăр. Ăстан килтĕн?

П о т. М а к.—Хуларан. Сăмавар лартма хушрăн-и?

У к ç и н е—Халех вĕрсе тухать. Аӡасем, çăвара карса тăриӡӡен сĕтел çине сават-сапа лартăр. (Хĕрĕсем лартаççĕ).

П о т. М а к-ӡ а—Наçтук, Елӡуша ӡĕп-ха. Мĕн халӡе килмест?

У к ç и н е—Вăл килте çук. Пăçăр Маккаровка ыйтса кайрĕ.

Пот. Мак.—Йурӗ еппин.

Укçине—Ашшӗ, Манехвэ ҫирленӗ вӗт, вилес пек выртать.

Пот. Мак.—Вилес пек, çветтуйсен ӗмӗрӗ вăрăм. Авалхи йуманран тунă турçăка çав пирӗн çветтуй.

Укçине—Пӗлмесӗр кирлӗ мара ан калаç. Ун ҫӗлхи те çӗтнӗ ӗнтӗ.

Пот. Мак.—(Ҫарăнса). Кама та пулин йарас пулать.

Укçине—Епӗ Пăнтелейе виçӗ хут кайса килтертӗм. Вырăнтан та хускалаймасть тет.

Пот. Мак.—Кам ăна пăхать тет. Ей унта çара ухмах пухăнна-çке. Леш Хҫукки, йӗке хӳри, астăвакан çуккипе ташла ташла ăнтан та кайрӗ пулӗ.

Укçине—Çылăха ан кӗр. (Шеремет) Хҫуккийӗ, шăлт ухмаха тухнă йӗре йӗре. (Калашшăнмартарах тăрса). Епӗ, ашшӗ, унта...

Пот. Мак.—Мӗн тата?

Укçине—Настук вара йар тесе йантăрать. Йамарăм сансăр пуçне.

Пот. Мак.—Йарса пăх-ха, мана каламасăр! Пăраски, кайса пăх сăмавар ҫас тухать-и? (Праски тухать).

Настук—Атте, йарҫӗ мана аппа патне. Кам ăна пăхтăр, йӗри тавра йут, йар.

Пот. Мак.—Шухăшласа пăхас пулаť-ха малтан. (Пăраски сăмавар илсе кĕрет). Акă сăмавар та. (Наçтукпа калаçма пăрахса). Мана кăшт кăпа кашкăрсем çисе йамарĕç.

Укçине—Ай турă! (Аллисемпе пĕççине çапса).

Пот. Мак.—Ĕмĕр ув ђухнехи пек кашкăр нумай курман. Пур йенђен те кашкăр! Çывăрса иђĕç. Шăлĕсене шак, шак, шак тутараççĕ, куçĕсем ђăл, ђăл, тал выђаççĕ. Пĕтрĕм тесе шухăшларăм.

Укçине— Йепле çăлăптăн.

Пот. Мак.—Стукалова тав, вут хурса тултарђĕ йĕри тавра.

Укçине—Çав Йакиме турă вăрăм ĕмĕр патăр питĕ ырă çын.

Пот: Мак. — Ырă çын. Ђун-илли, есрелĕ, йкă вăл кам!

Укçине—Мĕн калаçан. Вăл Христос турă йађĕпе хурлăх мĕн ђухлĕ курђĕ, тĕрмесенђе çўресе.

Пот. Мак.—Хулăпа хĕртнĕ пулĕ ăна, анђах тĕншĕн мар.

Укçине—Мĕпле вара?

Пот. Мак.—Хĕр-арăм ĕçĕ мар вăл. Есĕ çав Йаккима пуçăнтан кăларса пăрах, ĕмĕрлĕхе çав шуйттана ман! Ну, ађасем, есир тухса капăр-ха.

Укçине—Есĕ, ху та пĕр-ик самантa выртса кан.

Пот. Мак.—Ђим-ха. Лар-ха, кĕрре-ђунтан канашлар. Епĕ Настук çинђен калаçас тетĕп. Ăна мăшăрлама вăхăт çитнех.

Укçине—Тупнă вăт çак кунсенђе ун çинђен калаçма.

Пот. Мак—Хăçан калаçас тата. Ырă сăмаха хуй-те кăна хăçан та калаçма ырă. Епĕ ăна тепĕр кађђă тупрăм.

Укçине—Кама вара!

Пот. Мак—Хамăр Елђуша.

Укçине—Мĕн калаçан?!

Пот. Мак.—Есĕ сысна пек ан çухăр-ха. Ăна канашлар теççĕ, вал сысна пек çухăрат, хĕр-арăм çав.

Укçине—(Хăрса). Епĕ... епĕ... ăнланаймарăм, ашшĕ. Пуйан хĕрĕ йепле тарçа кайтăр-ха?

Пот. Мак. Есĕ ху мĕпле пуйана тухнăђђĕ-ха.

Укçине—Настук мĕн шухăшлĕ-ха ун çинђен,

Пот. Мак.—Ăна тата мĕн кирлĕ. Пĕвĕ те çÿлĕ, илемĕ те пур, пур йенђен те аван. Авантарах тумлантарсан хĕрÿ пăхса ытараймĕ.

Укçине—Есĕ ытлаваскатăн, ашшĕ. Пусна шухăш кĕнĕ кĕменех ĕç тума тытăнатăн. Анђах есĕ пирĕн пуç, ху кăмăлупа ту. Пĕр сăмах хирĕç калас çук...

Пот. Мак—Есĕ ăна ан систер.

Укçине—Каламăп, пĕр сăмах та каламăп. Мĕн Комаровкăна кайса кьлме йурĕ-ши?

Пот. Мак.—Кайăрах, епĕ выртса канам-ха. (Тухса кайат).

Укçине—Канах епĕ вырăн та хатĕрлесе хутăм... Настук, Настук.

## 8-мĕш курăнни.

### Амăшпе Наçтук.

Укçине—Аçу кайма хушрĕ. Ыран кайăпăр.

Наçтук—Тавта пуç турра, пĕр-ик куна çак тукатмăшланнă вырăнтан кайатпăр иккен.

Укçине—Епĕ Наçтук, Наçтук. Аçу-анну кил-çуртне курайми пултăн. Мăнастиртен килнĕреппех сăмсăна-тăсса çĕлен пек шăхăрса çуретĕн. Тавах, хĕрĕм, спаçипе!

Наçтук—Мĕн вара анне, мĕн çитмерĕ?

Укçине—Ку саманара аҫусенҫен пархатар ан кĕт. Ҫăн калавă иккен ашшĕ-амăш шухăшĕ аҫи-пăҫи çинҫе, аҫи-пăҫи шухăшĕ ҫулсем çинҫе, тесе. Амăшĕ хĕрĕшĕн йĕрет, хĕрĕ тата ташлат. Ех намăссăр, намассăр, çылăха пĕлес-ҫĕ. Акă епĕ вилсе кайсан пурăнса пăх-ха. Асăнăн, куҫăнăн, пулĕ. Ҫавсу çывăх пулсан та çыртаймăн.

Н а ç т у к—(Йĕрсе йарса) Анне, анне, ӡунăм! Вăл сăмахсемпе ман ӡĕрене ан тат, унтан пуçне те мана йăвăр.

У к ç и н е—(йĕре пуçласа) Ан йĕр, çитĕ, çитĕ. Епĕ çиленсе мар, ӡĕлхене килнипе каларăм. Турă парсан сире вырăн тупмасăр вилмĕп-ха.

Н а ç т у к—Анне, ан çилен ман çине. Ех анне, йăвăр мана çак тĕнӡере пурăнма. Епĕ пĕлсен-ӡӡĕ... хуйха, хуйха.

У к ç и н е—Мĕн тата хĕрĕм, мĕн пулӡĕ, Наçтук. Мĕн хуйхă?

Н а ç т у к—Ман хуйха-суйха, инкен-синкеве пĕтерес çук. Вилиӡӡен куç-çулĕ пĕтес çук, ман хуйхă та сӳнес çук. Епĕ йалан п'ӡӡен, никам та ӡуна пусарма çук. Хљуккийе курса пĕр-ик самант калаçас-ӡĕ, кăшт, ӡуна пусарасӡĕ.

У к ç и н е—Хљукки аннӳнтен çывăх пулӡĕ-и?

Н а ç т у к—(Йăнăшса амăшĕ хул-пуççи çине ӳкет) Вăл пĕтĕмпе пĕлет.

Укçине—Ах тур, тур, тур. Мĕн пулӡĕ вара ку? Хљукка мĕн пĕлет? Аннӳне кала, аннӳ ӡĕри пурне те ӡăтĕ, аннӳ куç-çулĕ, сан хуйхуна йухтарса йарĕ. Кала, ӡунам, кала, хĕрĕм!

Н а ç т у к—(Амăш кăкăрĕ çине пуç ӡиксе йĕрет),

У к ç и н е—Кала, ӡунна пусарам (ӡуп-тăват).

Н а ç т у к—Анне, ан ђуп-ту мана. Епĕ сăн ђуптунине тăпастăп.

У к ç и н е—Кала ĕнтĕ. Елле кађђа йурататни?

Н а ç т у к—(Ђÿређе патне кайат).

У к ç и н е—Ăçта тупрăн? Мăнастиртe-и?

Н а ç т у к—(Пуçне суллат).

У к ç и н е—Ăçта вара?

Н а ç т у к—Килте.

У к ç и н е—Кам вара? Прикасђик мар-и?

Н а ç т у к-(Васкаса тăрат те амăшне пырса ђуптăват) Анне, епĕ айăплă, каçар мана!

У к ç и н е—Турă çырни пулĕ. Атă аçу патне, ăна савăнтарар.

Н а ç т у к—Йуратма йуратрăм та кађђа кэйас çук! кађђа кайиђђен пусса сикĕп.

У к ç и н е—Мĕн калаçан? Аçу Елђуша пит те йуратнă. Хĕпĕртĕ.

Н а ç т у к—Мана ун пек упăшка кирлĕ мар.

У к ç и н е—Ăнланаймастăп, тупата турă ăнланаймастăп. Хăй йуратап та тет, кирлĕ мар тет тата. Ку мĕн вара?

Н а ç т у к—Епĕ ăна пĕлсе çитеймен. Тултан пăхма паттăрскер, ђăнах та паттăр пулĕ терĕм. Анђах унăн ђунĕ, атте ђунĕ пек, пĕр пуйанлăхшăн йĕрет. Ун пек упăшка кирлĕ мар мана.

Укçине—Калаçат вӗт. Кăмăлна каймасан пăрах, урăххине йурат. Тӗнӡе хӗсӗр мар вӗт.

Наçтук—Ӡим анне, епӗ пӗтӗмпех каламан-ха!

Укçине- (Хăраса) Мӗн тата?

Наçтук—(ӡӗр куççи çине тăрса) Анне, анне, есӗ мана ӳстерни, йӗрсе çитӗнтерни мура кайрӗ. Епӗ.., епӗ... хам хӗрӗн тасалăхне çухатрăм! Анне!...

Укçине—Наçтук!!!

*Ӡаршав.*

## 5-МӖШ ПАЙӖ.

### 6-мӗш карттинккă.

Теккоратсине çавнах хăварма та йурат. Кравайт, ун çинӡе Наçтук выртат. Пуç вӗçӗнӡе амăшӗ ларат, унтан леререх пăраски. Айакри кӗтесре Микихвер ӡӗр-куççи çинӡе ларат. Ӡаршав уçăлнă ӡухне шăпах.Айккинӡи алăкран вулани илтӗнет, сăмахсене уйăрма çук. Хулен кӗрет Потап Макçимӡă.

Пот. Мак—(Ӡӗнмесӗр пăхат Наçтук çине, унтан питне аллисемпе хупăрласа). Ех Наçтук, ӡунăм! Пăрахса хăваратăн пире.. Наçтук, Наçтук.

Укçине—Мĕн терĕ лекĕр!

Пот. Мак—(Аллипе сулсă, хăй куç-çулне шăлат те тенкĕл çине ларат).

Укçине—Ей турă!

Пот. Мак.—Праски, хулана Михал Петровçă патне çыру çыр-ха. Хамăн çырма вăй çук. Çасрах пул, йе мăнах йама хуш. Хĕре вилет тесе çыр. (Микихвер йăнăшат) Мĕн пулçĕ сана Микихвер?

Микихвер—Вилет. (Хурланса йĕрет).

Пот. Мак.—Ех турă, турă, çырлахсам мана çылăхлăскере.

Настук—Хуллен йăшăлтатса). Кăшт çĕклĕр-ха мана. Хĕреснанне çук-и? Курмасăрах вилес пулат. Ех... Праски, есĕ куптă-и? Атте анне, мĕн йĕретĕр?

Укçине—Ех çунăм типсе кайрăн-çке! (Йĕрет).

Настук—Халĕ кăшт çăмăлтарах, нимĕн те ыратмаст. Анне епĕ пурăнас çук çак çут-тĕнçере. Каçар мана анне.

Укçине—Хĕрĕм, çунăм, ан асăн!

Настук—Аттене каларăн-и?

Укçине—Каларăм, çунăм, каларăм.

Настук—Тата кам та пулин пĕлет-и?

Укçине—Кам пĕлтĕр? Çук. (Пурве те тухма хушат, Пот Мак-ран пуçне)

Н а ç т у к—Атте каçар мана, епĕ сана çилентертĕм каçар!

П о т. М а к.—Ан асăн ҫунăм, ан асăн.

Н а ç т у к—Çав тĕрлĕ сăмахсене, ҫăтма йăвăр.

П о т. М а к.—Ан калаç ăна, ҫĕрĕл ҫасрах.

Н а ç т у к—Атте ĕлĕк мана ҫуп-тунă пек ҫупту-ха.

П о т. М а к.—Савнă ҫунăм, хĕрĕм. (Ҫуп-туса йĕрсе йарат).

Н а ç т у к—Атте итле мана йулашкинҫен, ан йĕр.

П о т. М а к.—Йĕмĕп.

Н а ç т у к—Атте епĕ санран ыйтасшăн... каçарăна...

П о т. М а к.—(Куçĕпе çавăрса пăхат).

Н а ç т у к—Каçар ăна. Каçараймастăн-и? Апла пулсан усал ан ту тархасшăн.

П о т. М а к.—(Ҫăнмест).

Н а ç т у к—Атте, пайанах епĕ тупăкра выртăп, есĕ ман тупăк патĕнҫе тăрăп. Епĕ сан хытă кăмăлна кура йĕрĕп сана пăхса. Атте. (Йĕрсе йарат).

П о т. М а к.—Ырă есĕ... Нимĕн те тумăп. Турă каçартăр.

Н а ç т у к—Капла аван. Тавта пуç атте. Ăçта вăл?

П о т. М а к.—Комаровкăран килмерĕ-ха.

Н а ç т у к—Йурĕ... Атте халĕ пилле ĕнтĕ мана хăвăн ăслă пиллĕхўпе çак тĕнҫерен инçе çула кайма. Анне, есĕ те пилле!

Пот. Мак.—Наçтук, есĕ вилмĕн. Турĭ сана сывлăх парĕ.

Наçтук—Çук атте. Епĕ ура çине тăрас çук ĕнтĕ. Вилĕм ура вĕçĕнҫе тăрать, епĕ ăна куратăп. (Укçине алĭк уçать, кĕреççĕ). (Праскийе). Каçар мана йăмăкăм, сывă пул! Аппа патне кайсан Хҫуккипе иккĕшне ыттисене те пысăк салам кала. Епир ĕлĕк çÿренĕ вырăнсенҫе мана асăнса çÿре. Сывă пул. Каçар. Пилле мана вилме. (Рăпатвикпе Матрĕна пыраççĕ.

Микихвер—(Хытă йĕрсе, ум умне ҫĕркуçланать). Савнă ҫунăм, каçар мана! Каçар, таса ҫун! Аллисене çапса пуçне ҫиксе тăрать).

Наçтук—Кукка, ан ĕç ҫунăм...

Микихвер—Ĕçмĕп, ĕçмĕп. Сана пана сăмаха ҫăтмасан турă мана пĕçартăр. Таса ҫун, маншăн турă умĕнҫе тана ҫух, кĕл ту, кĕл ту маншăн, пĕтĕм тĕпҫе ылханпе йатса çÿрекен есрелшĕн... Наçтук, епĕ сана калама çук йуратнă-ҫҫĕ, анҫах çывăха ыма хăраттăм, инçетрех сана пăхса тăрса кĕл-тăзаттăм, турра кĕл тунă пек. Çÿлти турă умĕнҫе маншăн турра кĕл ту.

Наçтук—Çитĕ, çитĕ... Пилле мана кукка.

Микихвер—Есĕ ху мана пилле. Сан пиллĕхÿпе епĕ пĕтес çук, каллех çын пулăп. (Ҫĕркуçланса ларсан, Наçтук хăй аллине ун пуçĕ çине хурать).

Н а ç т у к — Атте, савнă атте пилле манă тата, ҫуп-ту. Анне, ҫуп-ту.

У к ç и н е — (Йĕрет).

М и к и т и ш н а — Хуллен вилет. Кĕл тăвăр.

Н а ç т у к — (Вăрăмăн тепре сывлат те, ҫĕнми пулат).

П о т. М а к. — (Хуллен ҫĕр-куççи çине ҳурат).

У к ç и н е — (Хытă уласа йĕрсе ҳĕрĕ кăкри çине пуçне ҳурат).

*Ҫаршав.*

---